24-мĕш çул тухать. Хакĕ 10 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1941 МАРТ 28 ЭРНЕКУН 73 (5788) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

МАСТЕР — ТУЛЛИ ПРАВĂЛЛĂ РУКОВОДИТЕЛЬ

Пирĕн партипе правительство предприятисенчи мастерсен авторитетне ӳстерме тата тĕреклетме кирли çинчен, çавăн пекех вĕсен прависене хӳтлесси çинчен яланах астутарса тăнă. Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ те мастерсен рольне хăпартни тата вĕсен ĕçне тĕрĕс йĕркелени производствăллă программăна пĕр тикĕс тата пахалăхлăн тултарса пырас çĕртме мĕнтери пысăк вырăн йышăнса тăнине татах та тепĕр хут кăтартса пачĕ.

Партконференци йышăннă решенисене пурнăçа кĕртсе пырса, предприятин руководителĕсен мастерсен рольне хăцартма, вĕсен ĕçне тĕрĕс йĕркелесе яма мĕн кирлĕ, çавсене пурне те хăйăртрах туса çитерес пулать. Мастер хăйĕн участокĕнче пĕртен пĕр руководитель, хăйĕн ответлăхне пĕлсе, ăна пĕрмаях туйса тăракан командир пултăр, унăн сăмахĕ, вăл хушни—каш ни рабочишĕн закон пулса тăтăр

Металлургсемпе горняксене 1937 çулти октябрь уйăхĕнче Кремльре йышăнса каласнă чухне, производствăри кĕçĕн тата вăтам командирсем çинчен Сталин юлташ çапла каланă: «Вĕсем,—тенĕ вăл,—пĕчĕк тата вăтам руководительсем, пирĕн вунтăр пин пур. Вĕсем хăйсене мăнна хуман çынсем, вĕсем хăйсене мала хуччăр тесе ăмсанмаççĕ, вĕсем палăрсах та каймаççĕ. Анчах вĕсене курмасăр тăни суккăрлăх пулнă пулĕччĕ. Мĕншĕн тесен, çав çынсенчен пĕтĕм халăх хуçалăхĕнче производствăн ăнăçлăхĕ килет. Апла пулсан, пирĕн хуçалăх руководствин ăнăçлăхĕ те вĕсенченех килет». Паллах, мастерсем те Сталин юлташ каланă çынсен — производство командирĕсен хисепĕнче тăраççĕ.

Кашни мастерăн предприятире кончретлă производствăллă участок—бригада пур. Бригада вăл—производствăн цусламĕш звени пулса тăрать. Продукци туса кăлармалли плана тултарасси. пысăк пахалăхлă тата ӳнĕ ларакан продукци туса кăларасси—пуринчен малтан бригада, мастер ертсе пыракан участок ăнăçлăн ĕçленинчен килет.

Партипе правительство пирĕнтен производствăллă плана предприяти тăрăх вăтам шутпа кăна мар, ăна кашни кун, кашни цехра, кашни бригадăра, кашни станок çинче, кашни сменăра тултарса пыма хушаççĕ. Завод е фабрика туса кăларнă пĕтĕм продукци комплектлă, стандартлă, пысăк пахалăхлă тата продукцин хăйне ларакан хакĕ ӳнĕ пулмалла, плана ассортимент тĕлĕшĕнчен те пĕтĕмпех тултармалла. Çак задачăна пурнăçа конкретлăн кĕртсе пыраканĕ—мастер ертсе пынипе ĕçлекен бригада. Предприятири кашни мастер хăйне пăхăнса тăракан рабочисене ĕçе тĕрĕс вырнаçтарса тухса, мĕнпур механизмсене—станоксене т. ыт. те туллин ĕçлеттерет пулсан, технологиллĕ процеса тĕрĕс организацилесе, чĕртавара, электроэнергине, машинăсене сĕрмелли тата ытти япаласене тирпейлĕн те перекетлĕн расходлама пĕлет пулсан, паллах, ĕç тухăçлăхĕ ӳсме пултарать, туса кăларнă продукцин пахалăхĕ хăпарать, продукцин хăйне ларакан хакĕ чакать, çакă вăл вара пĕтĕм предприятие тухăçлăн тата пĕр тикĕс ĕçлесе пыма, предприятин экономикăллă кăтартăвĕсене пĕрмаях лайăхланса пыма пулăшать.

Партин XVIII конференцийĕ йышăннă решенисене пурнăçа кĕртсе пынă май, республикăри чылай предприятисенче мастерсен ĕçне тĕрĕс организацилес тĕлĕшпе сахал мар ĕçсем туса ирттернĕ. Мастерсем хастарлăрах ĕçлеме пуçларĕç, вĕсем хăйсен прависемпе туллин усă курма тытăнчĕç. Çакна Стройтрестăн детальсем тăвакан заводри мастер Е. Смолов юлташăн сăмахĕсем те лайăх çирĕплетсе параççĕ. Малтанхи вăхăтсенче Е. Смолов юлташ хăйĕн ĕç вăхăтне материалсем, инструментсем шыраса ирттернĕ, ăна тивĕç мар ĕçсене тунă. «Хăш чухне,—тет вăл,—урайне те хамăннах шăлмалла пулатчĕ». Халĕ пачах урăхла. Вăл завода ир-ирех пырса пĕтĕм оборудованине, инструментсем сителĕклипе сителĕксĕррине тĕрĕслесе тухать, кашни рабочие задани парать, рабочисен ĕçĕн пахалăхне тăтăшах тишкерсе тăрать, ĕç кунĕ пĕтсен—заданине мĕн чухлĕ тултарнине, хăш рабочи мĕнле ĕçленине тĕрĕслет. Çакăн пек ĕçлени продукцин пахалăхне те, ĕç тухăçлăхне те хăпартнă.

Çĕмĕрле древкомбинатĕнчи А. Байăшев, В. Борзова, М. Яковлев, Улатăрти гармонь фабрикинчи П. Гурин мастерсен ĕçĕсем çинчен те çавнах каламалла. Вĕсем те, малтан, ĕç кунĕ пуçланиччен, оборудованисене, инструментсемпе материалсем пуррипе çуккине тĕрĕслесе, ĕç кунне планласа тухаççĕ. Кашни рабочие конкретлă задани параççĕ, панă задание мĕнле тултарнине тăтăшах тĕрĕслесе тăраççĕ, çапла вара простой пулассине пачах пĕтереççĕ. Панă заданисемпе кăтартусене пурнăçа кĕртнине тăтăшах тĕрĕслесе тăни—мастерăн авторитетне çĕклемелли чи кирлĕ условисенчен пĕри пулса тăрать. Çакна кашни мастерăн яланах астуса тăрас пулать. Тĕрĕслени çукки вăл—ответсăрлăх, тирпейсĕрлĕх патне илсе пырать тата технологи дисциплинине сӳрĕклетет.

Кашни талăкри ĕçе пĕлсе тата тĕрĕс планласан, графика тултарса пырсан, производствăллă плана хисеп енчен те, пахалăх енчен те, пур ассортиментсем тăрăх та пĕтĕмпех тултарса пыма пулать. Çакă вăл мастерăн чи пирвайхи тивĕçĕ пулса тăрать. Мĕншĕн тесен, мастер вăл—производствăна тӳремĕнех организацилекен çын, вăл хăйне шанса панă участокра тулли правăллă руководитель, технологи дисциплинине пăхăнса ĕçлессишĕн тата производство планне пур показательсем тăрăх та пурнăçа кĕртессишĕн пĕтĕмшĕпех ответ тытакан руководитель. Мастерăн производствăн технологиллĕ процесне, унăн экономикине тĕплĕн пĕлес пулать, унсăрăн вăл хăйĕн умĕнче тăракан задачăсен çӳллĕшĕнче тăма пултараймасть.

Мастерсен ĕçне тĕрĕс йĕркелес тĕлĕшпе юлашки вăхăтра чылай ĕçсем туса ирттернĕ, анчах, çакна калас пулать: хăшпĕр заводсен тата фабрикăсен руководителĕсем мастерсене çавăвах, хальчченхи пекех, тивĕç мар ĕçсене тутарасçĕ. мастерсен рольне хăпартассишĕн, вĕсен прависене хӳтлесишĕн тивĕçлипе тăрăшмаççĕ. Сăмахран, Канаш вагонсем юсакан заводри мастерсем хăйсене шанса панă участокенче пĕртен-пĕр хуçа пулса тăнине туймаççĕ. Завод руководстви производствăллă процеса операцийлĕ, çирĕп график тăрăх тĕплĕн организацилесе ситерейменех, инструмент хуçалăхне, планлас ĕçе тата материалсем вăхăтра тăратассине сителĕклĕн йĕркедемен. Çавăнпа та ĕнтĕ мастерсем Овчинников, Малыгин юлташсем, комплекс начальникĕ Дубовой юлташ инструментсем, материалсем, детальсем шыраса цехсем, складсем тăрăх чупса çӳреççĕ, хаклă вăхăта сая яраççĕ. Паллах, мастер çакăн пек условисенче ĕçлет пулсан, вăл кашни станок, кашни рабочи тата работница нормăна тултарнине тултарманнине, продукци пахалăхне тĕрĕслесе пыраймасть, ун пек чухне вара брак та, простой та темĕн чухлех пулаççĕ.

Мастерсен ĕçĕсене Улатăрти паровозосем юсакан заводра тата Куславкка комбинатĕнче те тĕрĕс йĕркелемен. Кунти мастерсем хăйсене тивĕç мар ĕçсене тăваççĕ. Вĕсем те кун-каçа завод тăрăх чупса çӳреççĕ, е конторăри тĕрлĕ йышши ĕçсене тăваççĕ, участокран пĕр минутлăха та уйăлмасăр ĕçлеме пултараймаççĕ.

Ĕç тата технологи дисциплинине çирĕплетес çĕрте мастерăн вырăнĕ пысăк. Вăл лайăх ĕçлекенсене хавхалантарса пыма, лодырьсене, производство дезорганизаторĕсене, брак, юриех простой тăвакансене, инструментсемпе оборудованисене тата материалсене пăсакансене, государство пурлăхĕ çине тивĕçсĕр пăхакансене ответ тыттарма пултарать. Кашни мастерăн çак правăпа анлăн усă курас пулать. Предприяти руководителĕсен, парторганизацисен мастерсене вĕсен прависем çинчен тĕплĕн ăнлантарса памалла, çав правăсене пурнăçа кĕртме пулăшмалла, кунпа пĕрлех мастер хăйĕн прависене, обязанноçĕсене пурнăçа кĕртсе пыннине тĕрĕслемелле.

Мастерăн рольне хăпартасси, унăн авторитетне ӳстерсе тĕреклетесси тата ĕç кунне тĕрĕс организацилесси хăй тĕллĕн пулса пыма пултараймасть. Мастерсен рольне вĕсен прависене пĕчĕклетме тата хĕсме пăхакансене хирĕç çивĕччĕн кĕрешсен, производствăн пĕтĕм процесне тĕрĕс организацилесен кăна, партконференци йышăннă решенисене пурнăçа кĕртсе пыма пулать Çак ĕçе пуринчен малтан, паллах, парторганизацисен, парти райкомĕсен пуçарса пымалла, вĕсен партконференци йышăннă решенисене пурнăçа кĕртме предприяти руководителĕсене кулленех конкретлăн пулăшмалла.

Мастер рольне пĕчĕклетни социализмлă промышленноçпа государствăна пысăк сиен кӳрет, çавăнпа та мастера ăна тивĕçлĕ мар ĕçсенчен хăтарас пулать,—çакна кашни руководителĕн яланах асра тытса тăрса пĕр минутлăха та манмалла мар.

Колхоз çамрăкĕсем ФЗО шкулне вĕренме каяççĕ

ШАХАСАН. Призыв пуçланчĕ. Малтанах Ушанарти Калинин ячĕпе тăракан колхозран Василий Егоров кĕрет. Врачсем унăн сывлăхне пăхса тĕрĕсленĕ хыççăн «юрăхлă» терĕç. Егоров комисси сĕтелĕ умне пырса тăрать.

— Мисере эсĕ?—ыйтать унтан комиссии председательĕ Скворцов юлташ.

— Вунçиччĕре.

— Фабрикăпа завод ĕçне вĕренме каяс килет-и санăн?

— Питех те каяс килет. Эпĕ сирĕнтен мана ФЗО шкулне вĕренме ямă ыйтатăп,—тет Егоров юлташ.

Ана комисси ФЗО шкулне вĕренме кайма юрăхлă пулни çинчен пĕлтерсен, вăл комисси пӳлĕмĕнчен савăнăçлăн кулса тухрĕ.

— Тинех кĕтнĕ ĕмĕт çитрĕ, — терĕ вăл. Ушанар ялсоветĕнчи çамрăксене комисси пăхса тухнă хыççăн призыва Чуракасси, Анат Сурăм, Ямаш, Туçи Çармăс, Чалкасси тата ытти ялсоветсенчи çамрăксем те кĕрсе тухрĕç.

Врачсем Ямашри «Ударник» колхозри Георгий Иванов сывлăхне тĕрĕслерĕç.

— Мĕн ыратать?—ыйтать врач.

— Çук, нимĕн те ыратмасть, хаваслăн ответлет Иванов.

— Миçе çул вĕреннĕ эсĕ?

— Çиччĕ,—ответлет вăл.

— Вĕренме каяс килет-и?

— Каяс килет. Эпĕ колхозра та стахановец пулнă. Унта та лайăх вĕренсе стахановла ĕçлеме пулатăп.

Комисси Иванова та ФЗО шкулне вĕренме ямă йышăнать.

Комиссие кĕрекен çамрăксен ĕмĕчĕсем пысăк. Вĕсем пурте социализм строительствинче активлăн хутшăнса ĕçлекен çынсем пулаçшăн.

Чăваш АССР Совнаркомĕ йышăннă тăрăх, пирĕн районри колхозсенчен Çĕмĕрлери мехлесопункт çумĕнчи ФЗО шкулне 40 ача вĕренме ямалла.

Призыв пысăк çĕкленӳпе иртрĕ. Колхоз çамрăкĕсем 66 ача комисси витĕр тухрĕç. ФЗО шкулне вĕренме ямă чи çирĕп сывлăхлă, колхоз производствинче лайăх ĕçлекен çамрăксене 40 çын суйласа илчĕç.

В. Я-в.

ИШЛЕЙ, мартăн 27-мĕш. (Телефонпа). Колхоз çамрăкĕсем хăйсене ФЗО шкулĕсене вĕренме ямă ыйтса 71 çын заявлени панă. Районри призыв комисси йĕ вĕсенчен 34 çынна ФЗО шкулĕсене ямалла тунă. Çамрăксем призыва пысăк савăнăçпа пынă, призыв аванах иртнĕ.

Халь çамрăксене ФЗО шкулне ăсатма хатĕрленеççĕ. Вĕсене валли çиелтен тата аялтан тăхăнмалли кĕпе-тумтирсем, ботинкăсем т. ыт. япаласем хатĕрлеççĕ.

Апрелĕн 12-мĕшĕнче путевкăсем илнĕ çамрăксем Кирери ФЗО шкулне вĕренме тухса каяççĕ.

Призыв комиссийĕнче

Вăрман промышленноçĕпе стройматериалсен промышленноçĕн ФЗО шкулĕсенче пĕрремĕш черетпе вĕрентме илмелли çамрăксен призывĕ (мобилизацийĕ) районра мартăн 20-мĕшĕнче пуçланчĕ. Призыв (мобилизаци) организованно иртсе пычĕ. Çамрăксем тулли кăмăлпа призыв комиссине пырса тухаççĕ.

Мартăн 24-мĕшĕнче, ытти кунсенчи пекех, призыв комиссийĕ ирхине 9 сехетре ĕçе тытăнчĕ.

Шарыпка ялсоветĕнчен килнĕ 17 çула çитнĕ çамрăксем пĕрин хыççăн тепри призыв комиссин сĕтелĕ умне пырса тăраççĕ.

— Хушамату мĕнле? — ыйтать призыв комисси членĕсенчен пĕри.

— Кирилл Романов, — ответлет вăл.

Вăл, Кирилл Романов, Хирлеп ялĕнчен. 40 кило туртать, çӳлĕшĕ 148, кăкăр çаврăкăшĕ 72 сантиметр. Сывлăхлă. Таса куçлă.

— ФЗО шкулне кайма юрăхлă, — каласа парать ăна призыв комисси председателĕн заместителĕ, ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Гаврилов юлташ

Романов юлташ комисси пӳлĕмĕнчен пысăк хаваспа тухса каять.

Унтан комисси пӳлĕмне Александр Степанов пырса кĕрет. Вăл колхозри комсомол комитечĕн секретарĕ. Ана малтан врачсем пăхаççĕ

— Вĕренме каймастăн, санăн чĕре вăйсăр, уçă сывлăшра ытларах пулмалла, ялан физзарядкăсем тумалла,—терĕ ăна призыв комиссийĕ.

— Çук, юлташсем, чĕре ыратмасть манăн. Вăл, тен, врачсен умĕнче вăтаннă пек пулчĕ пулĕ. Каясахчĕ манăн вăл шкула...

Призыв комиссино Шарыпкăсем хыççăн Вырăс Сурм ялсоветĕнчи çамрăксем кĕреççĕ.

— Хушамату мĕнле?

— Николай Соснин. 1923 çулта çуралнă.

— Комсомолец-и?

— Çук-ха халь. Комсомол ретне кĕме ыйтса заявлени панă. ФЗО шкулĕсенче занятисем пуçланиччен комсомолец пулатăп.

Николай Соснин ФЗО шкулне вĕренме кайма юрăхлă пулчĕ.

Призыв комиссийĕ пĕтĕмпе 5 кун хушши ĕçлерĕ. Вăл кунсем хушшинче призыв комиссийĕ витĕр 270 çамрăк тухрĕç. Вĕсенчен 38 çынна ФЗО шкулĕсене вĕренме ямă уйăрса илнĕ. Унта сывлăхлă, патмар çамрăксем вĕренме каяççĕ, совет çĕршывĕн çирĕп резервийĕн йышне хутшăнаççĕ, квалификацийлĕ рабочисем пулаççĕ.

Элĕк. («Чăваш Коммуни» корр.).

СССР СОВНАРКОМĔНЧЕ

„Сталинла преми лауреачĕн“ званине тăвасси çинчен

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ наука, искусство, литература деятелĕсене тата изобретательсене—Сталинла преми илнисене—«Сталинла преми лауреачĕн» званине памалла тума йышăннă.

Сталинла премисене памалли йĕрке çинчен

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Сталинла премисене памалли йĕрке çинчен Постановлени йышăннă.

СССР Совнаркомĕ Сталинла премисем парас ĕçе çаксем çине хунă:

а) наука енĕпе тунă ĕçсемшĕн тата изобретенисемшĕн—науканпа изобретательство ĕçĕнчи Сталинла премисем тĕлĕшпе ĕçлекен Комитет çине;

б) искусствăпа литература енĕпе тунă ĕçсемшĕн—искусствăпа литература ĕçĕнчи Сталинла премисем тĕлĕшпе ĕçлекен Комитет çине.

СССР Совнаркомĕ авторсен коллективĕсене памалла тунă Сталинла премисене çакăн пек йĕркепе параççĕ: а) коллективра икĕ çын пулсан, премине вĕсем хушшинче çурмаран уйăраççĕ; б) коллективра виçĕ çын пулсан, руководителе премин çуррине параççĕ, премин иккĕмĕш çурпайне вара коллективăн ытти икĕ членĕ хушшинче пĕрпекшер пайсемпе уйăраççĕ; в) коллективра тăватă çын тата ытларах та пулсан, руководителе премин виçĕ пайĕнчен пĕр пайне параççĕ, виçĕ пайĕнчен икĕ пайне вара коллективăн ытти членĕсем хушшинче пĕрпекшер пайсемпе уйăраççĕ. (ТАСС).

Вăрман промышленноçĕн, стройматериалсен промышленноçĕн тата чугунçул строительствин ФЗО шкулĕсене призыв йĕркипе вĕрентме илес ĕç мĕнле пыни çинчен

Ĕç вăйĕсен Резервисен Главнăй Управленийĕнче

Колхозри тата ялти ытти çамрăксене призыв (мобилизаци) йĕркипе ФЗО шкулĕсене илес ĕç ултă кун хушши пырать ĕнтĕ. Çак срок хушшинче призыв комиссийĕсем 72.567 çынна, е призыв йĕркипе илмелли пĕтĕм контингентăн 68,4 процентне илнĕ, вĕсенчен вăрман промышленноçĕн ФЗО шкулĕсене — 37.906 çын, стройматериалсен промышленноçĕн шкулĕсене—14.613 çын, чугунçул строительствин шкулĕсене—20.048 çын илнĕ.

Колхозри çамрăксемпе ялти ытти çамрăксем вăрман промышленноçĕн, стройматериалсен промышленноçĕн тата чугунçул строительствин ФЗО шкулĕсене кĕме кăмăллани çинчен призыв комиссийĕсене 66.000 заявлени ытла панă.

Призыв уйăмах Белоруссире, Тутар республикинче, Вологда, Калинин, Киров, Рязань, Смоленск облаçĕсенче ăнăçлăн иртсе пырать.

Мартăн 25-мĕшĕнче Молотов, Тамбов, Харьков тата Чкалов облаçĕсенче ФЗО шкулĕсене призыв йĕркипе вĕрентме илсе пĕтернĕ. (ТАСС).

Ĕç вăйĕсен Резервисен Главнăй Управленийĕ çумĕнче учебно-производственнăй совет тунă

Ремесленнăй училищесенче, чугунçул училищисенче тата ФЗО шкулĕсенче производствăна вĕрентес ĕç методикине лайăхрах организацилеме Ĕç вăйĕсен Резервисен Главнăй Управленийĕ çумĕнче учебно-производственнăй совет туса йĕркеленĕ.

Çак совет 31 çынран тăрать. Совет членĕсем хушшинче — чăлăш фрезеровщик Гудов юлташ, каменщик-ордоносец Орлов юлташ, Военно-Инженернăй Академин МИИТ профессорĕ Раздобреев юлташ, «Серп и молот» заводри прокатнăй цех мастерĕ Туртанов юлташ, ЦК ВЛКСМ, ВЦСПС представителĕсем тата Ĕç вăйĕсен Резервисен Главнăй Управленийĕн ертсе пыракан руководителĕсем, ремесленнăй училищесемпе чугунçул училищисен директорĕсем тата мастерĕсем. ТАСС).

Стахановла ĕçленĕшĕн значоксем илчĕç

ÇЕМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). СССР Вăрман промышленность Халăх Комиссариачĕ древкомбинатри чи лайăх ĕçлекен инженерно-технически работниксене «Отличнику соцсоревнования» значокпа наградăланаччĕ. Наградăланисем çак кунсенче вăл значоксене алла илчĕç.

СССР Наркомлес значокне пĕтĕмпе виçĕ çын — сушильнăй цех мастерĕ В. Иванов, смена мастерĕ Орешников тата технически контроль отделĕн старший контрольнăй мастерĕ И. Алексеев юлташсем илчĕç. Значоксене Наркомлесславкĕн начальникĕ И. Шацкий юлташ панă.

СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ

ЧУКОТКА НАЦИОНАЛЬНĂЙ ОКРУГĔНЧИ ЯРМАРКăСЕМ

Камчаткăри Петропавловск хулинчен çапла пĕлтереççĕ: мартăн 25-мĕшĕнче Чукотка национальнăй округĕнче — Анадырь, Морковск, Чукотка районĕсенче тата Шмидт мысĕ çинчи поляр станци сывăхĕнчи тундрăра кашни çул ирттерекен çурхи ярмаркăсем уçăлнă. Чи инçетри стойбишĕсенчи чукча-колхозниксем пĕлансем çинче ларса пынă. Ярмаркăра палаткăсем, хĕрлĕ урангсем, чайнăйсем туса лартнă. Ярмаркăсене нумай таварсем — тискер-кайăк тирĕсем, пулă, кайăк-кĕшĕксем т. ыт. те илсе пынă.

СОВЕТЛА ГРОДНО ХУЛИНЧИ МУЗЕЙСЕМ

Неман юханшывĕн çыранĕнчи Гродно хулинче, Польша королĕн замокĕ пулнă çуртра историпе археологи музейĕ уçăлать. Музей валли 12 пине яхăн экспонат пухнă. Вĕсем хушшинче — Хĕвеланăç Белоруссири ĕççыннисен революцийлĕ кĕрешĕвĕ çинчен, ирĕке тухнă крайри ĕççыннисем социализм строительствине хутшăнни çинчен каласа паракан материалсем.

БУХГАЛТЕРСЕН ПАРТИ РАЙКОМĔНЧИ КАНАШЛАВĔ

Мускав хулинче партин Сокольнически райкомĕ районри хăшпĕр предприятисенче оборудованине, пурлăха тата материалсене учета илес ĕç мĕнле пулса пынине сăнаса вĕренме пуçланă. Райком работникĕсем хăйсен экономика тĕлĕшĕнчи пĕлӳĕхне ӳстереççĕ, производство экономикин конкретлă ыйтăвĕсемпе паллашаççĕ.

Çак кунсенче парти райкомĕ государствăна вырăнти промышленность предприятийĕсенчи главнăй бухгалтерсен канашлăвне ирттернĕ. Канашлура 50 предприятири бухгалтерсем пулнă. Таварсемпе материалсене учета илес ĕç ыйтăвĕсене, продукцин хăйне тума ларакан хакĕ çинчен тăракан ыйтусене сӳтсе-явнă.

МУСКАВ — СОВЕТ СОЮЗĔН СТОЛИЦИ.



УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Охотнăй рядран Манежнăй площаде пăхсан. Сылтăмра — СССР Совнаркомĕн çурчĕ.

Н. КУБЕЕВ фото-ӳкерчĕкĕ. (ТАСС).

Шахматистсен матч-турнирĕ

Ботвинник çĕнтерĕвĕ

ЛЕНИНГРАД, мартăн 26-мĕш. (ТАСС). Виççĕмĕш турта тĕп тимлĕх Кереспа Ботвинник партийĕ çинче пулнă. Çакă вăл вĕсем тăваттăмĕш хут выляннă вăйă пулнă. Çакăн умĕнхи виçĕ партире вĕсем пĕр-пĕрне çĕнтереймен.

Паян пирвайхи ходсенчен тытăнсах вăйă калама çук çивĕчленсе кайнă. Пуçарулăха хăй аллине çавăрса илнĕ хыççăн, Ботвинник вăйлă атака пуçласа янă. Хурисен лашисем противник королĕ патнелле çĕмĕрсе кĕнĕ, вара 23-мĕш ходра Керес парăннă. Ботвинник пĕтĕм партине пĕр-кăлтăксăр выляса ирттернĕ.

Бондаревскипе Смыслов партийĕ лăпкăн сарăлса пынă, 35-мĕш ходра вĕсем ничья тума килĕшнĕ—пĕр-пĕрне çĕнтереймен.

Болеславский халĕ те чирлĕ-ха, çавăнпа та унпа Лилиенталь хушшинче вăйă пулман.

Виçĕ тур хыççăн малта Ботвинник пырать, вăл икĕ парти выляса 2 очко пухнă. Кересăн та çаван пекех 2 очко, анчах та вăл 3 парти выляннă.

Ыран—тăваттăмĕш тур. Тăваттăмĕш турта Ботвинникпе Бондаревский, Лилиентальпа Керес, Болеславскипе Смыслов выляççĕ.

ЭЛЕКТРОМУЗЫКАЛЛА ИНСТРУМЕНТСЕН АНСАМБЛĔ

Ленинградра электромузыкăллă инструментсен—эмиритонсен пĕрремĕш ансамбльне организацинленĕ.

Ансамбльре 10 эмиритон пулать. Ятарласах порграмма хатĕрлеççĕ. Ансамбль валли произведенисене Д. Шостакович, Б. Асафьев тата ытти композиторсем сыраççĕ.

ТЕХНИКАЛЛА КУЛЬТУРАСЕМ АКСА ТАВАКАН ÇĔР ЛАПТАКĔСЕМ УСЕÇÇĔ

Прибалтикăри республикăсенче вăйлăн аталанса пыракан промышленность вырăнти чĕртавар базине чылаях сарма хушать Кăçалхи çул, пĕлтĕрхипе танлаптарсан, йĕтĕм йышăнса тăракан çĕр лаптăкĕ 14.700 гектар чухлĕ ӳсет, сахăр кăшманĕ йышăнса тăракан лаптăк — 8.500 гектар ӳсет. Кăçалхи çул пирвайхи хут коксагыз акма тытăнаççĕ. Латвири уйăрсенче кок-загыз шăн гектара яхăн çĕр йышăнать, Литвара опытлă участоксем пулаççĕ.

Латвири хресченсем çак çĕнĕ культурăпа питĕ интересленеççĕ.

ЗАВОДРИ ÇАМРĂКСЕМ ВАЛЛИ ЛЕКЦИСЕМ

Мускаври «Каучук» заводăн клубĕнче çамрăксем валли вырăссен XIX ĕмĕрти литературипе тăрăх тăтăшах лекцисем вуласçĕ. Çак кунсенче генийлĕ поэтăн А. С. Пушкинăн творчествипе çинчен лекци итленĕ. Столицăри театрсенчи артистсем поэтăн темиçе произведенине вуласа панă.

М. Ю. Лермонтов ячĕпе вечер иртерме хатĕрленеççĕ. Писательсен творчествипе паллаштарас шутпа литературăллă-художествăллă выставкăсем организацилеççĕ.

ИНÇЕТРИ МАЯК ÇИНЧЕ

Инçетри маяк çинчи çынсем талăкĕпех вахтăра тăраççĕ, совет карапĕсене тĕрĕс çул тытса пыма пулăшаççĕ. Хаяр штормсем, тĕтресемпе çил-тăмансем вăхăтĕнче маяк çутипе хăватлă сирена сасси моряксене калама çук пысăк пулăшу парать.

Панов юлташ ертсе пыракан пысăк мар коллектив хăйĕн ĕçне юратса тăвать, хăйĕн пысăк ответлăхĕ çинчен яланах асра тытать. Кунта пур механизмсем те пĕр кăлтăксăр ĕçлеççĕ. Инспекци ăна пĕр хут çеç мар, Лăпкă океан флотĕнчи чи лайăх коллектив, тесе хакланă.

Маяк çинчи сложнăй техника пĕлӳлĕхе пĕрмаях хăпартса пыма хушать. Маяк çинче ĕçлекенсем пурте пысăма пĕлмесĕр вĕренсе пыраççĕ.

ССР СОЮЗĔН СОВНАРКОМĔНЧЕ

Колхозсем тата единоличниксен хуçалăхĕсем государствăна обязательнăй йĕркепе йĕтĕн-долгунец, средне-русски кантăр тата кăнтăрти кантăр парасси çинчен

Колхозсенче йĕтĕн тата кантăр акса тăвас ĕçе малалла вăйлатса пырас, промышленность валли кирлĕ чухлĕ чĕртавар тăратас тата колхозсен йĕтĕн-сăс изделийĕсем тĕлĕшĕнчи нушисене тивĕçтерес шутпа, ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăннă:

1. Йĕтĕн-долгунец, средне-русски кантăр тата кăнтăрти кантăр продукцийĕсене контрактаци договорĕсем тăрăх хатĕрлемелли хальхи йĕркене пăрахăç тăвас.

2. 1941 çултан пуçласа, государствăна обязательнăй йĕркепе çакăн пек продукцисем тăратмалла тăвас:

а) йĕтĕн-долгунеца — Архангельск, Вологда, Горький, Иваново, Калинин, Киров, Ленинград, Мускав, Молотов, Новосибирск, Омск, Орел, Рязань, Смоленск, Тула тата Ярославль облаçĕсенчи, Алтайпа Красноярск крайĕсенчи, Коми, Мари, Удмурт тата Чăваш АСС Республикисенчи, Белорус тата Украина СС Республикисенчи колхозсем тата единоличниксен хуçалăхĕсем тăратаççĕ.

б) средне-русски кантăрпа кăнтăрти кантăра—Воронеж, Горький, Джамбул, Иркутск, Куйбышев, Курск, Новосибирск, Омск, Орел, Пенза, Рязань, Свердловск тата Тамбов облаçĕсенчи, Алтай, Красноярск, Краснодар тата Орджоникидзе крайĕсенчи, Башкир, Кабардино-Балкар, Мари, Мордва, Çурçĕр-Осетин, Тутар тата Чăваш АСС Республикисенчи, Белорус, Киргиз тата Украина СС Республикисенчи колхозсем тата единоличниксен хуçалăхĕсем тăратаççĕ.

3. Çапла тăвас: çак постановлении 2-мĕш пунктĕнче кăтартнă облаçсенчи, крайсенчи тата республикăсенчи колхозсем государствăна обязательнăй йĕркепе тăратмалли йĕтĕн-долгунец, средне-русски кантăр тата кăнтăрти кантăр продукцийĕн поставкисене, СССР Совнаркомĕ тата ЦК ВКП(б) «Колхозсем тата единоличниксен хуçалăхĕсем государствăна обязательнăй йĕркепе тăратмалли йĕтĕн-долгунец, средне-русски кантăр тата кăнтăрти кантăр продукцийĕн тăратассине çинчен» 1940 çулти апрелĕн 11-мĕшĕнче йышăннă постановлении 2-мĕш пунктĕпе тата ССР Союзĕн Совнаркомĕ «Колхозсене хăмла вырăнĕсем йышăнса тăракан çĕр лаптăкĕсенчен государствăна обязательнăй йĕркепе тĕштырă, рис, çĕрулми, пахча-çимĕçсем тата утă тăратассинчен хăтарасси çинчен» 1940 çулти сентябрĕн 19-мĕшĕнче йышăннă постановленипе килĕшӳллĕ туса, колхозсем çумне çирĕплетсе панă акма юрăхлă çĕрĕн (акма юрăхлă çĕр лаптăкĕн шутне йĕтĕн-долгунец тата кантăр йышăнса тăракан çĕр лаптăкĕ те кĕрет) кашни гектарĕнчен шутласа хураççĕ.

4. Союзлă тата автономлă республикăсен Совнаркомĕсене, ĕççыннн депутачĕсен крайсемпе облаçсенчи Совечĕсен исполкомĕсене, обязательнăй йĕркепе государствăна йĕтĕн-долгунец, средне-русски кантăр тата кăнтăрти кантăр продукцийĕ тăратас тĕлĕшпе республика, край тата область валли çирĕплетсе панă нормăсем тăрăх, колхозсем государствăна обязательнăй йĕркепе йĕтĕн-долгунеца тата средне-русски кантăра, çăс çине куçарса шутласа, йĕтĕн-долгунецпа средне-русски кантăр вăрлăхне, тунине тата кăнтăрти кантăрăн вăрлăхне гектартан килограмсемпе шутласа, кăнтăрти кантăр сăсĕн, шыва хутса пултарнă çурăмсен номерĕсемпе тунасен сортне кăтартса, — государствăна обязательно тăратмалли поставкăсен çулталăкри нормисене кашни район валли çирĕплетсе пама тата, вĕсене ССР Союзĕн Совнаркомĕ çирĕплетнĕ хыççăн, 1941 çулти апрелĕн 10-мĕш тĕлне пичетлесе кăларма хушас.

Районсем валли нормăсем туса çирĕплетнĕ чухне нормăсене пĕчĕклетме, уйрăм районсемпе колхозсене, — вĕсен йĕтĕн-долгунец тата кантăр акса тăвакан çĕр лаптăкĕсем çук е вăл лаптăксем пысăк мар пулсан, — государствăна йĕтĕн-долгунецпа кантăр тăратассинчен пачах хăтарма юрать, анчах та çакна тунă чухне обязательнăй йĕркепе тăратма пĕтĕм республика, край, область тата район валли çирĕплетнĕ нормăсене пĕтĕмĕшпех пăхăнса тăмалла.

МТС обслуживанинче тăман колхозсен обязательнăй йĕркепе тăратмалли поставкăсен нормисем çав районри МТС обслуживанинче тăракан колхозсем валли çирĕплетнĕ нормăсенчен 10 процент пысăкрах пулмалла.

Вăрлăх тума акакан çĕр лаптăкĕсем пур колхозсем валли государствăна обязательнăй йĕркепе йĕтĕн-долгунец, средне-русски кантăр тата кăнтăрти кантăр вăрлăхĕсем тăратмалли поставкăсен нормисене пĕтĕмĕшле йĕркепе туса çирĕплетеççĕ, нормăран иртсе юлакан ытти вăрлăхсене колхозсем госзакупкăсен йĕркипе государствăна параççĕ.

Селекциллĕ çĕр лаптăкĕсенчен. СССР Наркомземĕн планĕ тăрăх вăрлăх тума анлă ретсемпе акнă йĕтĕн-долгунец, средне-русски кантăр тата кăнтăрти кантăр лаптăкĕсенчен çăс тата шыва хутса пултарнă çурăмсем памалли нормăсене районсен нормисен çуррийĕ чухлĕ туса çирĕплетеççĕ.

5. Колхозсене йĕтĕн-долгунец вăрри вырăнне — кантăр вăрри е кантăр вăрри вырăнне—йĕтĕн-долгунец вăрри, пĕр центнершĕн пĕр центнер эквивалентпа пама, çавăн пекех кантăр çăсĕ вырăнне йĕтĕн-долгунец çăсĕ е йĕтĕн-долгунецăн çăсĕ вырăнне кантăр çăсĕ пама ирĕк парас. Ана çакăн пек эквивалентпа тумалла: йĕтĕн-долгунец çăсĕн икĕ центнеро-номерĕшĕн—пĕр центнеро-номер кантăр çăсĕ.

6. Йĕтĕн-долгунец е кантăр акнă единоличниксен хуçалăхĕсем тата кооперацине кĕрсе пĕрлешмен кустарьсем акнă çĕр лаптăкĕ çинчен государствăна обязательнăй йĕркепе гектартан çакăн чухлĕ нормăпа тăратаççĕ: вăтам шутпа 9,5 номерлĕ йĕтĕн çăсĕ—150 килограмм, вăтам шутпа 5 номерлĕ кантăр çăсĕ—120 килограмм тата кантăр вăрри — 110 килограмм.

Çапла тăвас: Курскпа Пенза облаçĕсенчи, Мордва АСС Республикинчи колхозниксен килĕсем, кантăр акнă çĕр пуррисем, акнă çĕр лаптăкĕ çинчен обязательнăй йĕркепе гектартан çакăн чухлĕ нормăпа тăратаççĕ: вăтам шутпа 5 номерлĕ кантăр çăсĕ—80 килограмм, кантăр вăрри—70 килограмм.

7. 1941 çулта государствăна обязательнăй йĕркепе йĕтĕн-долгунец, средне-русски кантăр тата кăнтăрти кантăр продукцийĕ тăратас тĕлĕшпе çулталăкри обязательствăсене тултармалли календарлă сроксене çапла çирĕплетес (çулталăк планĕнчен процентсемпе):

I.

Йĕтĕн-долгунец тăрăх

Облаçсем, крайсем, республикăсем	Продукци ячĕсем	Памалли сроксем—планран процентсемпе						
		август	сентябрь	октябрь	ноябрь	декабрь	январь	февраль
I.								
Молотов облаçĕ	Вăрлăх	—	20	45	35	—	—	—
Новосибирск обл.	Шыва хутса пултарнă йĕтĕн çурăмĕсем	—	—	15	30	35	20	—
Омск облаçĕ	Çăс	—	—	5	20	35	20	20
Алтай крайĕ								
Красноярск крайĕ								
II.								
Архангельск обл.	Вăрлăх	5	45	35	15	—	—	—
Вологда облаçĕ	Шыва хутса пултарнă йĕтĕн çурăмĕсем	—	10	20	30	40	—	—
Киров облаçĕ	Çăс	—	—	5	25	40	20	10
Ленинград облаçĕ								
Коми АССР								
Удмурт АССР								
III.								
Ытти мĕнпур облаçсем, крайсем тата республикăсем.	Вăрлăх	20	50	20	10	—	—	—
	Шыва хутса пултарнă йĕтĕн çурăмĕсем	—	10	35	35	20	—	—
	Çăс	—	—	15	35	30	20	—

II.

Средне-русски кантăр тăрăх

Облаçсем, крайсем, республикăсем	Продукци ячĕсем	Памалли сроксем—планран %-семпе					
		сентябрь	октябрь	ноябрь	декабрь	I-мĕш квартал	II-мĕш квартал
I.							
Горький облаçĕ	Вăрлăх	10	60	30	—	—	—
Орел облаçĕ	Шыва хутса пултарнă кантăр çурăмĕсем	—	15	25	40	20	—
Мари АССР	Çăс	5	10	20	30	20	15
Чăваш АССР							
Белорус ССР							
Украина ССР							
II.							
Воронеж облаçĕ	Вăрлăх	10	50	40	—	—	—
Куйбышев облаçĕ	Шыва хутса пултарнă кантăр çурăмĕсем	5	15	20	30	20	10
Курск облаçĕ	Çăс	5	10	20	25	20	20
Пенза облаçĕ							
Рязань облаçĕ							
Тамбов облаçĕ							
Мордва АССР							
III.							
Ытти мĕнпур облаçсем, крайсем тата республикăсем.	Вăрлăх	5	45	50	—	—	—
	Шыва хутса пултарнă кантăр çурăмĕсем	—	10	30	40	20	—
	Çăс	—	10	15	30	25	20

III.

Кăнтăрти кантăр тăрăх

Облаçсем, крайсем, республикăсем	Продукци ячĕсем	Памалли сроксем—планран процентсемпе				
		сентябрь	октябрь	ноябрь	декабрь	I-мĕш квартал
Краснодар крайĕ						
Орджоникидзе крайĕ						
Джамбул облаçĕ	Вăрлăх	—	60	40	—	—
Киргиз ССР						
Украина ССР	Тунасем	10	30	30	20	10
Кабардино-Балкар АССР						
Çурçĕр-Осетин АССР						

8. Çапла тăвас: СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Колхозсем тата единоличниксен хуçалăхĕсем государствăна обязательнăй йĕркепе тĕштырă тата рис тăратасси çинчен» 1940 çулти апрелĕн 11-мĕшĕнче йышăннă постановлении 8-мĕш пунктĕ тăрăх тĕштырă тата рис тăратассинчен хăтарнă хуçалăхсем государствăна обязательнăй йĕркепе йĕтĕн-долгунец, средне-русски кантăр тата кăнтăрти кантăр тăратмаççĕ.

9. Çапла тăвас: обязательнăй поставкăсем тăрăх 16 номертен пуçласа 20 çити номерпа тата 8 номертен пуçласа унтан пахарах çăс панă йĕтĕн-долгунецăн çăсне пĕрре çурă хисеппе шутласа, йĕтĕн-долгунецăн 20 номертен пахарах çăсне—икĕ хут ӳстернĕ хисеппе шутласа, тыллană кантăр çăсне—15 процент надбавка хурса—колхоз обязательнăй поставкăна тултарнă шута кĕртеççĕ. Шыва хутса пултарса паракан йĕтĕн-долгунецăн 2,5 номерлĕ тата пысăкрах пахалăхлă çурăмĕсене, çавăн пекех шыва хутса пултарнă кантăрăн 1,3 номерлĕ тата пысăкрах пахалăхлă çурăмĕсене 50 процент надбавка хурса (виçи тата центнеро-номерсем тăрăх) колхоз обязательнăй поставкăсене тултарнă шута кĕртеççĕ.

10. Çапла тăвас: 1941 çулта пухса илекен тухăçлăхран пуçласа, йĕтĕн-долгунецăн çăсĕпе шыва хутса пултарнă çурăмсемшĕн, кантăрăн çăсĕпе шыва хутса пултарнă çурăмĕсемшĕн, йĕтĕн-долгунец, средне-русски кантăр тата кăнтăрти кантăр вăррисемшĕн заготовка тăрăх тӳлеме, 1-мĕш, 2-мĕш тата 3-мĕш номерлĕ приложенисем тăрăх, çĕнĕ хаксем тăвас.

11. Çакăн пек тăвас: йĕтĕн-долгунеца тата кантăра малтанлăха ĕçлесе тирпейлекен заводсем колхозниксене-возчиксене, вĕсене колхозсем шутласа паракан ĕçкунĕсемсĕр пуçне, йĕтĕн е кантăр çурăмĕсене завода турттарса пынăшăн 6 километртан пуçласа 15 километр таран турттарса пымалла пулсан кашни центнершăн километртан 6 пус, 16 километртан пуçласа унтан инçетерехрен турттарса пымалла пулсан центнершăн 10 пус тӳлеççĕ.

12. Çакăн пек тăвас: колхозсем государствăна йĕтĕн-долгунец çăсне, кантăр çăсне, кăнтăрти кантăрăн шыва хутса пултарнă çурăмĕсене тата тунисене хăйсем обязательнăй поставкăсене тултарнă хыççăн тата МТС ĕçĕсемшĕн натуроплата тӳлесе татнă хыççăн сутаççĕ; йĕтĕн-долгунец, средне-русски тата кăнтăрти кантăрсен вăрлăхĕсене колхозсем государствăна хăйсем обязательнăй поставкăсене тултарнă хыççăн, МТС ĕçĕсемшĕн натуроплата тӳлесе татнă хыççăн, вăрлăхлăх кивçен илнине тавăрса панă хыççăн тата вăрлăх фончĕсене хывнă хыççăн сутаççĕ.

13. Çакăн пек тăвас: государствăна йĕтĕн-долгунец тата кантăр продукцине сутакан колхозсене, заготовка хакĕçĕр пуçне, хак çумне çакăн чухлĕ хушса тӳлеççĕ:

а) йĕтĕн-долгунец çăсне, кантăр çăсне, шыва хутса пултарнă йĕтĕн е кантăр çурăмне, йĕтĕн-долгунец, средне-русски тата кăнтăрти кантăрăн вăрлăхне обязательнăй поставкăн 10 проценчĕ таран сутсассăн — сутнă пĕтĕм продукцишĕн заготовка хакĕ çумне 100 процент хушса тӳлеççĕ;

б) йĕтĕн-долгунец çăсне, кантăр çăсне, шыва хутса пултарнă йĕтĕн е кантăр çурăмне, йĕтĕн-долгунец, средне-русски тата кăнтăрти кантăрăн вăрлăхне обязательнăй поставкăн 10 процентĕнчен ытларах тата 25 проценчĕ таран сутсассăн — сутнă пĕтĕм продукцишĕн заготовка хакĕ çумне 200 процент хушса тӳлеççĕ;

в) йĕтĕн-долгунец çăсне, кантăр çăсне, шыва хутса пултарнă йĕтĕн е кантăр çурăмне, йĕтĕн-долгунец, средне-русски тата кăнтăрти кантăрăн вăрлăхне обязательнăй поставкăн 25 процентĕнчен нумайрах сутсассăн—сутнă пĕтĕм продукцишĕн заготовка хакĕ çумне 300 процент хушса тӳлеççĕ;

г) кăнтăрти кантăрăн тунисене обязательнăй поставкăн 25 проценчĕ таран сутсассăн сутнă пĕтĕм кантăр тунисемшĕн заготовка хакĕ çумне 100 процент, 25 процентран нумайрах сутсассăн—150 процент хушса тӳлеççĕ.

14. Колхозсене тата колхозниксен килĕсене обязательнăй поставка тăрăх тата МТС ĕçĕсемшĕн натуроплата шучĕпе панă кашни центнер йĕтĕн-долгунец вăрришĕн тата кантăр вăрришĕн ӳсен-тăран çăвĕ 2 килограмм (килограмшăн 5 тенкĕ хакпа) тата 15 килограмм жмых (килограмшăн 7 пус хакпа) сутмалла, государство закупки тăрăх панăшăн — ӳсен-тăран çăвĕ 12 килограмм тата 35 килограмм жмых (çав хаксемпех) сутмалла.

15. Государствăна обязательнăй поставка тăрăх тата МТС ĕçĕсемшĕн натуроплата шучĕпе парас тырă вырăнне колхозсенчен йĕтĕн-долгунец тата кантăр сӳсĕпе шыва хутса пултарнă çурăмне çак хисеппе илмелле: вăтамран 10-мĕш номерлĕ йĕтĕн-долгунец сӳсĕн пĕр центнерне е вăтамран 5-мĕш номерлĕ кантăр сӳсĕн пĕр центнерне — 5 центнер тырă вырăнне; вăтамран 1,0-мĕш номерлĕ шыва хутса пултарнă йĕтĕн-долгунец çурăмĕн пĕр центнерне е вăтамран 0,5-мĕш номерлĕ шыва хутса пултарнă кантăр çурăмĕн пĕр центнерне — 50 килограмм тырăшăн.

Колхоз тырă тăратмалли обязательствăна тултарасси шутне кĕртсе йĕтĕн-долгунец сӳсĕ, кантăр сӳсĕ тата шыва хутса пултарнă йĕтĕн е кантăр çурăмĕ парать пулсан панă продукци хакĕн 50 процентне тӳлемелле, ытти 50 процентне колхоза вăл йĕтĕн-долгунец сӳсĕ, кантăр сӳсĕ тата шыва хутса пултарнă йĕтĕн е кантăр çурăмĕ памалли çулталăклăх обязательствăна тултарнă хыççăн тӳлемелле.

Колхоз йĕтĕн-долгунец тата кантăр продукцине памалли обязательствăсене çак постановление кăтартнă сроксенче тултармасассăн, вара тырă парасси вырăнне панă йĕтĕн-долгунец тата кантăр сӳсне, шыва хутса пултарнă йĕтĕн е кантăр çурăмне çак продукцисене памалли обязательствăсене тултарасси вырăнне кĕртсе шутласçĕ, панă тесе шутланă пулнă тырă хисепне тавлашусăр йĕркепе колхозран тырăн шыраса илеççĕ.

16. Государствăна йĕтĕн-долгунец тата кантăр продукцине пама хутшăнтарман колхозсене йĕтĕн-долгунец е кантăр хăйсен хуçалăхĕнче тытăлашкăн акма сĕнес.

17. Государствăна йĕтĕн-долгунец тата кантăр продукцийĕ парас тĕлĕшпе çак постановление кăтартса панă обязательствăсене тултарасси кашни колхозăн тата единоличник хуçалăхĕн чи малтан пурнăçа кĕртмелли обязанноçĕ пулса тăрать,—обязательствăсене юриех тултармасăр тăнăшăн закон тăрăх айăпласçĕ.

18. Влаçăн вырăнти органĕсене, çавăн пекех заготовка органĕсене колхозсем тата единоличниксем çине йĕтĕн-долгунец тата кантăр продукцийĕ парас тĕлĕшпе гектар тăрăх илмелли нормăран иртекен обязательствăсем хума пачах чарнă.

Йĕтĕн-долгунецăн тата кантăрăн государствăна памалли обязательствăсене тултарнă хыççăн ытлашши юлнă пĕтĕм продукцийĕ колхозсен тата единоличниксен хуçалăхĕсен аллинче юлать, ăна вĕсем хăйсене мĕнле кирлĕ çавăн пек тытăкалама пултараççĕ.

19. Йĕтĕн-долгунец, средне-русски кантăр продукцине тата кăнтăрти кантăрăн тунине, обязательнăй поставка йĕркипе параканнине, илессине, çавăн пекех çак продукцине сутăн илсе хатĕрлессине те СССР Наркомтекстильпе ĕçлекен районсенче ун çине хурас тата ытти районсенче—Центросоюз çине хурас.

Вăрлăх тăвакан колхозсенчен кăнтăрти кантăрăн вăрлăхне, йĕтĕн-долгунец тата кантăр вăрлăхне илессине СССР Наркомзаме (Госсортфонд) çине хурас.

1-мĕш №-лĕ приложени.

Йĕтĕн-долгунец сӳсне, кудельне, шыва хутса пултарнă çурăмне тата сырецне илмелли хаксем

(тенкĕпе, центнершăн).

Тыллană йĕтĕн		Йĕтĕн кудельĕ		Йĕтĕн-сырец (килте тирпейлени)		Шыва хутса пултарнă йĕтĕн çурăмĕ		Шыва хутса пултарман йĕтĕн çурăмĕ		Йĕтĕн-сырец (заводра тирпейлени)	
Сорт номерĕсем	Хакĕ	Сорт номерĕсем	Хакĕ	Сорт номерĕсем	Хакĕ	Сорт номерĕсем	Хакĕ	Сорт номерĕсем	Хакĕ	Сорт номерĕсем	Хакĕ
3	80	3	75	2	50	0,5	8	—	—	1,0	24
4	120	4	110	3	75	0,75	16	брак	6	1,5	38
5	150	5	140	4	100	1,0	24	1,0	18	2,0	50
6	190	6	170	5	120	1,25	30	—	—	2,5	62
7	220	7	190	6	140	1,5	36	1,5	27	3,0	75
8	240	8	210	7	160	1,75	42	—	—	3,5	87
9	260	9	230	8	180	2,0	48	2,0	36	4,0	100
10	280	10	260	—	—	2,5	60	2,5	45	—	—
11	320	11	290	—	—	3,0	72	3,0	54	—	—
12	340	12	320	—	—	3,5	100	3,5	75	—	—
13	370	—	—	—	—	4,0	120	4,0	90	—	—
14	400	14	360	—	—	4,5	140	4,5	105	—	—
15	425	—	—	—	—	5,0	160	5,0	120	—	—
16	450	16	390	—	—	—	—	—	—	—	—
17	475	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—
18	500	18	420	—	—	—	—	—	—	—	—
19	525	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—
20	550	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—
21	575	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—
22	600	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—
23	625	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—
24	650	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—
26	1.100	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—
28	1.300	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—
30	1.600	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—
32	1.750	—	—	—	—	—	—	—	—	—	—

Йĕтĕн пакли 1 сорт центнершăн 40 тенкĕ
„ „ II „ „ 30 „

2-мĕш №-лĕ приложени.

Кантăр сӳсне, кантăр кудельне, шыва хутса пултарнă çурăмне тата хутса пултарман çурăмне илмелли хаксем

(Тенкĕпе, центнершăн)

Кантăр сӳсĕ-сырец, шыва хутса кăларнă кантăр тата пуса		Арламалли кĕске сӳс, шыва хутса кăларнă кудель		Шыва хутса пултарнă кантăр тата пуса çурăмĕ		Шыва хутса пултарман кантăр çурăмĕ	
Номер	Хакĕ	Номер	Хакĕ	Номер	Хакĕ	Номер	Хакĕ
						Турбиннăй	
3	120			0,3	15	1	37
4	320	2	110	0,5	30	2	27
5	400	3	150	0,7	44	3	17
						Кудельнăй	
6	470	4	310	0,9	54	1	18
7	550			1,1	66	2	14
8	650			1,3	80		
9	750			1,5	95		
10	850			1,7	1 15		

Кантăр пакли 1 сорт центнершăн 40 тенкĕ
„ „ II „ „ 30 „

Асăрхаттарни:

1. Тӳнĕ кантăр сӳсĕшĕн тата тыллана кантăр çурăмĕшĕн 10 процент хушса тӳлеççĕ, тымарринче татнă кантăршăн татах 10 процент хушса тӳлеççĕ.

Хăлхинчен тасатнă кантăр сӳсĕшĕн, кантăр сӳсĕ-сырецăн (шыва хутса пултарса тунин) номерĕсен хакĕсенчен шутласа, 15 процент ытларах хак хураççĕ.

2. Сарса пултарнă кантăрăн тата пусан сӳсне шыва хутса пултарнинчен пĕр сорт каярах хурса хаклаççĕ.

Сарса пултарнă 3-мĕш №-лĕ кантăр тата пуса сӳсĕн хакне тата сарса пултарнă 0,3-мĕш №-лĕ кантăр çурăмĕн хакне шыва хутса пултарнин хакĕн виçĕ пайĕнчен пĕр пайĕ чухлĕ каярах хаклаççĕ.

3. Кăнтăрти кантăрăн тунисене илмелли хаксем 1940 çулта пулнисемех юлаççĕ.

3-мĕш №-лĕ приложени.

Йĕтĕн-долгунец, средне-русски тата кăнтăрти кантăр вăрлăхĕсен хакĕсем

(Тенкĕпе, 100 процент таран таса вăрлăхăн центнерĕшăн).

СОРТ-ЛАХ	Йĕтĕн-долгунец	Средне-русски кантăр	Кăнтăрти кантăр
Вăрлăхлăх сайра акнишĕн			
Супер-элита тата элита	600	650	800
I-мĕш репродукци	400	500	600
II-мĕш репродукци	300	400	500
III-мĕш репродукци тата вырăнти сортсем	225	250	320
Вăрлăхлăх йăвă акнишĕн			
II-мĕш репродукци	180	—	—
III-мĕш репродукци	160	—	—
Сортлă вăрлăхсем	120	150	220
Ахаль вăрлăхсем	80	100	—

Колхозниксен пурнăçне юсама пулăшакан документ

Лампăсем сутас умĕн «Труд» колхозра чӳречесенчен пуху пуласси çинчен пĕлтерсе çӳрерĕç. Çакăн хыççăнах колхозниксем пухăва васкавлăн тухса утрĕç.

Клуба лăках халăх пырса тулчĕ. Ялхуçалăх артелĕн председателĕ Н. Быков юлташ колхозниксен пухăвĕ уçăлни çинчен пĕлтерчĕ.

— Хаçатсем çинче Чăваш АСС Республикинчи колхозсене малалла чечеклентерсе пыма, колхозниксен пурнăçне тата ытларах юсама пулăшакан документ — «Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстернĕшĕн Чăваш АСС Республикинчи колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен» СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă постановлени пичетленсе тухнă. Халĕ çав постановлени çинчен ăнлантарса пама районри çĕрĕç пайĕн старший агрономĕ Дмитриев юлташ сăмах илет.

Постановленин кашни пунктне ăнланса илмелле тĕплĕн вулама тытăнчĕç. Хăшĕпĕр пунктсене, пурне те лайăх асра тытса юлмалла пултăр тесе, икшер тата виçшер хут та вуласçĕ. Кашни колхозник постановленин тĕп шухăшне тата вăл мĕнле вырăн йышăнса тăнине ăнланса юлма тăрăшать, çĕнĕ постановлени вĕсене колхоза юратма вĕрентет тата унăн хуçалăхне тĕреклетессишĕн кĕрешме пысăк майсем туса парать. Çаксем, паллах, колхозниксен пурнăçне юсама, пуян та культурăллăрах пурăнма çул уçса параççĕ.

Пухура тухса каласма пуçларĕç. Пĕрин хыççăн тепри хĕрӳллĕ сăмахсем каласçĕ.

— Пирĕншĕн партипе правительство тăрăшасçĕ. Çакна пула колхозсем, вăл шутран пирĕн артель те, çулран çул тырпул тухăçлăхне хăпартса пыраççĕ, артель пурлăхне нумайлатаççĕ.

— Пирĕн ӳсĕмсем татах пысăкрах пулмалла. Колхозниксен пурин те çине тăрса ĕçлемелле, ĕç тухăçлăхне хăпартса пымалла. Çапла майпа колхозниксен пурнăçĕ татах лайăхланĕ... — теççĕ вĕсем.

Колхозниксем хăйсен сăмахĕсенче партипе правительствăна тав тăваççĕ, ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстернĕшĕн колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен йышăннă постановление ырлаççĕ.

Колхозниксем, пĕр саслă пулса, резолюци йышăнаççĕ, кăçал гектартан 20 центнер тĕштырă туса илме обязательство илеççĕ.

* * *

Тепĕр кунне «Труд» колхозра çаксанашкал ĕçсем пулса иртрĕç. Фермăра Валентина Васильевăпа Анастасия Семенова (иккĕш те вĕсем фермăра ĕçлекенсем) «Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстернĕшĕн Чăваш АСС Республикинчи колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен» СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă постановлени вĕсемшĕн мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен калаçса ларараççĕ.

— Хамăр çумма çирĕплетсе панă ĕнесенчен планпа пăхнинчен иртнерсе сĕт суса илсен, çĕнĕ закон тăрăх темиçе процентне пире пама пултараççĕ. Вăл çапла пулать ĕнтĕ: пирĕн хамăр çумма çирĕплетнĕ ĕнесенчен 2.000-шер литр сĕт суса илмелле. Кашни ĕнерен çак 2.000 литртан пуçласа 2.500 литр таран суса илсен, 30 процентне пире параççĕ. Питĕ лайăх. Вăл пире тăрăшса ĕçлеме, ĕнесене юратса пăхма хушать. Ку тĕлĕшпе пирĕн ăмăртăва тухмалла.

Эпир вĕсемпе сăмах хушрăмăр: — Халĕ ăмăртса ĕçлеместĕр-и мĕн эсир?

— Çук, — ответлерĕç вĕсем.

— Мĕншĕн?

Колхозри пур бригадăра та çавнашкалах, ниҫăш фермăра та социализмла ăмăртса ĕçлемеççĕ. Ку ĕçе кунта организацилесе пымаççĕ, пуринчен ытларах калаçса иртреççĕ.

Суракине хатĕрленсе çитеймен-ха. Плугсем, сӳресем чылайăшĕ юсавсăр, сеялкăсем кĕлет умĕнче юр айĕнче ларараççĕ. Тислĕк хатĕрлесси, кĕл пухасси кирлĕ пек пулса пымасть.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстернĕшĕн колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен йышăннă постановлени колхозниксене çĕклентерсе пымалла. Ку постановлени çинчен колхозниксене ăнлантарса панă хыççăн, вĕсем тепĕр кунне Элĕкрен тислĕк турттарса килме тухса кайрĕç.

И. МОСЕЕВ.

Партконференцин решенийёсене пурнăçа кёртсе пырасси шён

Партин Пётём Союзри XVIII конференцийён решенийёсенче кăтартса пана ситменлёхсем пирён машинно-трахторнăй станцин ёçёнче те çук мар. Вăл ситменлёхсене пуçламёш парторганизацин çăк кунсенче пулса иртнё пухăвёнче тёплён кăтартса пачёç. МТС тракторсемпе, комбайнсемпе тата ытти ялхуçалăх машинисемпе çителёксёр усă курать. Газогенераторнăй тракторсем валли чуркăсене алă вайёпе хатёрленё, çав вăхăтрах чуркăсем хатёрлемелли станок пёр çул хушши ёçлемесёр ларнă. Халё çав станокпа ёçлеме тытăннă, хатёрлекен чуркăсен хакё те йӳнелчё. Алăпа хатёрленё чухне пёр кубла метр чурка 34 тенке ларнă пулсан, станокпа хатёрленё чухне 24 тенке ларать. Çапла вара иртнё çулта чуркăсене станокпа хатёрленё пулсан государство укçине 9 пин тенкё перекетлеме май пулнă.

Мастерскойра гильзăсене шлифовать тумалли станокпа МТС организациленёрёнпех усă курман. Гильзăсене Канашри мастерскоя илсе кайса юсаттарнă, пысăк расход пулнă. 1941 çулта станокпа ёçлеме пуçларăмăр гильзăсене халё хамăр патăртах юсат пăр. Çакă вара тракторсене вăхăтра юсаса пётерме, укçа-тенкёне перекетлеме пулăшрё. Çавнашкалах электромоторпа тата «Таль» кранпа туллин усă куратпăр.

XVIII партконференци решенийёсене пурнăçа кёртсе пырас тёллёпе пуçламёш парторганизаци конкретлă мероприятисем палăртрё. Çав мероприятисене кулленхи ёçре пурнăçласспшён кашни коммунист ответлă пулса тăрать.

Мёнпур ёçе вăхăтра тата пысăк пахалăхпа тăвасси оборудованисемпе материалсене тёрёс сыхласа усранинчен килет. Машинно-трахторнăй станцинче тракторсене хёл вăхăтёнче усрама сарайсем пур. Анчах ытти машинăсем усă вырăнтах лараççё. Кун пирки Наркомзем та айăплă, вăл МТС нушисем çине питех çаврăнса пăхасшăн мар.

Партконференци решенийё тăрăх, чёртаварсене, материалсене, оборудованисене урăх çёре сутма чарнă. Çакă вăл питех те кирлё. Иртнё çулта нефтебазăн заведующийё пулса ёçленё Ильин пёр пин килограмм бензина урăх çёре сутнă.

Бригадăсенче заправочнăй инвентарьсем çителёксёр пулнине тата типтерсёр тыткаланине пула иртнё çулта МТС 20 пин килограмм горючи ытлашши расходланă. Кăçал çакăн пек ан пултăр тесе заправочнăй инвентарьсене кирлё тарăн хатёрлетпёр.

Партконференци решенийёсене пурнăçа кёртсе пырас шутпа кăçал кашни трактор тата бригада валли 5 кунлăх график тăватпăр. График тăрăх ёçлени пире тракторсене вăхăтра юсаса пётерме пулăшрё.

Производствăна лайăх ертсе пырас тесен унăн техникине тёплён пёлмелле. Халё машинно-трахторнăй станцинче ертсе пыракан работниксем трактор, комбайн тата ытти машинăсен техникине çине тăрса вёренеççё. Март уйăхён юлашки кунёсенче экзамен пама шутлаççё.

Машинно-трахторнăй станцинчи пуçламёш парторганизаци тата коммунистсем XVIII партконференцин решенийёсене станцăра ёçлекенсем хушшинче ăнлантарса парас тата çав решенисене пурнăçлас тёллёпше тăрăшса ёçлеççё.

А. ПЛАТОНОВ.

Шăмăршă МТС директорён политика енёпе ёçлекен заместителё.

Помидор вăрлăхне хатёрлесе акасси

Помидор чирёсем тёрлёрен пулаççё. Вăл шутра рак чирё — чи сиенли. Ракпа чирленё помидор кăтăмсем е тӳрленнё çимёççем 80—85 процент таран пётме пултараççё.

Рак калчаран пуçласа çимёç пиçсе ситиччепех парниксенче те, хирте те пулма пултарать. Парниксенче рак чирёпе чирленё помидор калчисем малтан шанса каяççё, унтан вара типсе лараççё. Хире кăларса лартнă помидор калчисем çинче çак чирён палăлисем урăхларах. Кунта помидор калчи парникри пек труках шанса кайма сть, малтан помидор калчин уйрăм туратгисемпе çулçисем çеç шанаççё, каярахпа вара вёсем пётёркеленсе лараççё. Çав вăхăтрах ытти туратсем тата çулçăсем чылай вăхăт хушши сывă, ем-ешёлех тытăнса тăраççё.

Çак чир помидор калчисене хăш чух ытла та хытă пусмăрлать. Ун пек чух помидор калчипе çулçи тунисем çинче тăрăхла хура йёрсем палăраççё. Каярахпа вăл йёрсем тёлёнче помидор тунипе çулçă тунисем çинче тăрăхла çураксем палăраççё. Çавнашкал помидор калчине сивёч çёçёпе урлă касса пăхсан, унăн туни ăшёнче хуралнă пырăнсем курăнаççё.

Рак чирёпе помидорăн калчи анчах мар, çимёçё те чирлет. Чирленё помидор çимёçё çинче малтанах сарăрах шурă пăнчăсем пулаççё. Каярахпа çав пăнчăсем хуралаççё, вёсен тёлёнче помидор çимёçё çуркаланса каять. Çав хуралнă пăнчăсем тавра шурă йёр çаврăнать. Çавна пула пăнчăсем кайăк-кёшёк куçё евёрлё пулаççё. Çавăнпа та вара рак чирне урăхла «птичий глаз» тесе те ят парассё.

Хăш помидор çимёçёсем çиелтен пăхма сывах, касса пăхсан, ăшё çемçелсе кайни е тата çёрме пуçлани палăрать. Рак чирёпе помидор çимёçён туни те чирлет. Чирлё тунасем çимёççесене йăтса тăрайми пулаççё, çавăнпа та вара вёсен çимёçёсем пиçсе çитиччен е пиçе пуçланисем те тăкăнса пётеççё.

Çакăнта кăтартнă паллăсене пула рак чирне помидорăн ытти чирёсенчен çăмăллăнах уйăрса илме пулать.

Рак чирё помидор тухăçне ӳстерес ёçре питё пысăк сиен кӳрет. Çак чир тин сарăлса пырать. Нумай çёре сарăлма памасăр, кёске вăхăтра пётерес тёллёпше СССР Çёрёç Халăх Комиссариачё рак чирё çине карантин хунă. Çавăнпа та рак чирёпе кёрешесси карантин йёркипе пулса пымалла.

Март уйăхён юлашки кунёсенче тата апрель уйăхён пуçламёшёнче колхозсем помидор акаççё. Çак рак чирён бактерисем помидор вăрлăхё çине те закланаççё. Çавăнпа та помидор чирлё ан пултăр тесен, вăрлăхне протравить тумасăр акмалла мар.

Помидор вăрлăхне çакăн пек протравить тумалла:

Растворне 1 пай 40 процентлă формалин çине 100 пай шыв ярса тăваççё. Çав раствор ăшне вăрлăха сайра тёртнё пиртен çёленё пёчёк михёне ярса, 17 минута хушши тытса йёпетмелле. Пёр пек йёпенсе çиттёр тесе раствор ăшёнче вăрлăха лайăх пăтратмалла (йывăçран тунă пёчёк калекпе, е тата ытти япалапа та). 17 минута иртнё хыççăн, вăрлăха раствор ăшёнчен кăтараççё те купаласа, купине дезинфекциленё михё таврашпе лайăх витсе, икё сехет хушши тытаççё. Çав вăхăтра томлени текен процесс пулса иртет. Вăрлăха купара лайăх витсе тытмасан, вăл процесс кирлё пек пулса иртмест, унăран протравить тунин усси те сахал пулать. Витмелли тăрсене вăрлăха протравить тума тăрленё растворпах дезинфекцилеççё. Томлени тума купара икё сехет хушши тытнă хыççăн, вăрлăха çав формалин растворёпех дезинфекциленё йывăç урайне е михё тавраш çине сарса пёр-пёр шăмалла мар хуралтра сӳхен сарса типётеççё. Вăрлăхăн нӳрлёхё стандартпа пăхнă таран чаксан, вара акма хатёр пулать.

Помидор вăрлăхне акас умён икё кун маларах протравить тума тытăнмалла.

Помидорăн чирёсем, уйрăмăнах рак чирё, вăрлăхсăр пуçне тата дезинфекцилемен парниксем, теплицăсем, рамăна витекен матăсем тата помидор ӳстерес ёçре тытказламалли инвентарьсем урлă та сарăлма пултараççё. Çавăнпа парниксемпе теплицăсене тислёкпе тăпра кӳртинчен хлорнăй изВеçпе, е изВеçпе тата формалинпа дезинфекцилемелле. Вёсемпе пёрле рамăна витмелли матăсене тата инвентарьсене те çавнашкал растворсемпех дезинфекцилемелле.

Т. НИКИТИН.

Графика пăсни пулмалла мар

Февраль уйăхёнче комбинат ассортимент тăрăх та, çавăн пекех укçа хакёпе шутласан та продукци туса кăларас плана тултараймарё.

Пёрремёш номерлё цех чи кирлё дегальсене туса кăларас енёпе хăйён графикне тултарайман пирки ытти пехсене те графика тултарма чăрмантарчё. 2-мёш номерлё цех плана çичё изделки тăрăх тултарас вырăнне икё изделки тăрăх кăна тултарчё. 3-мёш номерлё цех чи ответлă заданисене пурнăçа кёртеймерё. 4-мёш номерлё цех кăна хăйён планне 100,1 процент тултарчё, анчах ассортиментсем тăрăх вăл та плана тултараймарё.

Мартăн 20-мёшне комбинат уйăхри плана 45,3 процент тултарчё. Уйрăм цехсем çапла ёçлерёç: 1-мёш номерлё цех пётёмпе илсен, плана ытлашши пех тултарса пырать, анчах чи кирлё детальсене туса кăларас тёллёпше кулленхи графика пăснă. 2-мёш номерлё цех 4685 №-лё задание мартăн 2, 6, 8, 10 тата 13-мёшсенче кăна тултарса пычё, ытти кунсенче вара графика пăсса ёçлерё, уйăхри плана 43 процент кăна тултарчё; 3-мёш номерлё цех ятарласа пана заказ тăрăх продукци пачах туса кăлармарё, 1 тата 3-мёш №-лё пукансем туса кăларас тёллёпше графика пăсрё, 2-мёш №-лё пукан тăвас тёллёпше те юлса пырать. уйăхри плана 52,7 процент çеç тултарчё: 4-мёш номерлё цех ятарласа пана пёр задани тăрăх — продукци туса кăларас тёллёпше малтанах хатёрленё талăклăх графика мартăн 12-мёшёнчех пăсса ёçлерё.

Чёртаварсен биржинче 1-мёш номерлё цеха чёртавар тăратмалли тата ăна сорт тăрăх уйăрмалли график хатгаринчен те çук-ха. Çакă вара цеха детальсем туса кăлармалли графика тултарма чăрмантарать. Халё çак цеха чёртавар парса тăрасси лайăхланчё, çавăнпа цех хăшпёр детальсене туса кăларас тёллёпше плана тултарса пыма пуçларё. Анчах отхода цехран вăхăтра илсе тухманни ёçе питех те чăрмантарать. Кунта нумай детальсем купаланса выртаççё, вёсене сортласа йёркелемен, çавăнпа типётекен цех хăйён ёçне график тăрăх йёркелесе пыма тултараймасть. Çак ёçре тата «Большевик» завод та айăплă. Вăл пăс йёркеллё парса тăман пирки цехсен графикне пăсать.

Уйрăм цехсен руководителёсем ёçе XVIII партконференци йышăннă решенисенче кăтартса пана пек урăхлатса çинетеймен-ха. 2 тата 3-мёш номерлё цехсенче хăшпёр изделисене туса кăларассине ӳстерме майсем пур пулин те, вёсене туса кăларассине ӳстерме тăрăшмаççё.

Çак ситменлёхсене пула мартăн пирвайхи çуруйăхёнче продукци туса кăларас тёллёпше комбинат графика пăсса ёçлерё.

В. ИВАНОВ.



Уявчăн çинче: «Ёмёт» колхозри (Çёрпӳ р.) пăру пăхакан стахановка Нина Ильина юлташ.

Г. Костин фото-ӳкерчёкё.

▲ ▲ ▲

Малта пыракан ялсовечё

Калинински районри Юнтала ялсоветё укçа-тенкё пухассипе иртнё çулта пачар ёçлекен ялсоветсен хисепёнче ганă. 1940 çулти пёрремёш квартал планне 59,3 процент, иккёмёш квартал планне 79 процент тултарнă пулнă.

Парти райкомё тата райсовет исполкомё Юнтала ялсоветё мёншён начар ёçленине, унăн çăлтавне тёпчесе вёренё, ёçре татăклă пулăму парса пынă. Çавăн пекех ялсовет исполкомё ге, ялти актив та ялсовет кая юлса пынине шута илнё. Финанс ёçё мёнле пулса пыни çинчен ялсовет исполкомён ларăвёнче тата пухусенче сӳтсе-явнă, ситменлёхсене тата çав ситменлёхсем мёншён пулса пынине палăртнă. Çакăн хыççăн ялти актив пёр-пёринпе ăмăртса ёçлеме договорсем тунă, финанс ёçне вăйлатас тёллёпше обязательствăсем илнё.

Ялсовет исполкомё ялти активăсертсе пыраççине вăйлатрё, пуçламёш парторганизаци ялсоветне пулăшма партипе комсомол активне мобилизацилерё. Ялсовет исполкомён ларăвёнче депутатсен ёçёсем çинчен колхоз председателёсенчен тата финанс работникёсенчен отчетсем итленё. Пуçламёш парторганизацин пухăвёнче уйрăм коммунистсенчен партпоручанисене мёнле пурнăçа кёртсе пынă çинчен ыйту лартса сӳтсе-явнă.

Пуçламёш парторганизаци çумёнче 3 çынтан агитколлектив организациленё. Агитаторсем ёççыннисем хушпинче партипе правительствăн решенийёсене, кунпа пёрлех вăхăтра укçа-тенкё тӳлени государство вăйăватне ӳстерме тата хамăрăн пурнăçа лайăхлатма пулăшни çинчен тёпчён ăнлантарса панă. Агитаторсем Васильев, Григорьева, Николаева, Христофоров, Мушляков юлташсем кăтартуллăн ёçлеççё.

Ёçре «Коммунар» стена хаçатё те газёçлипе пулăшать. Вăл уйăхра икё хут тухса тăрать, финанс ёçёнчи ситменлёхсене, ёçри паха опытсене çутатса парать.

Çапла партипе комсомол организацийёсем пулăшнипе тата ялти активăртсе ёленипе Юнтала ялсоветё 1940 çулти укçа-тенкё пухмалли тăваттăмёш квартал планне 113 процент тултарнă. Тунă ситенӳпе лăпланса ларман. 1941 çулта та ăмăрту сарăлса пынă. Партин Пётём Союзри XVIII конференцийё уçăлнă тёле квартал планне 89 процент ытларах, мартăн 11-мёшне 161 процент тултарнă.

1941 çулти укçа-тенкё пухмалли пёрремёш квартал планне срокчен тултарнă хыççăн налог агенчё Муляков юлташ Аслă Яваш ялсоветчён налог агентне Платонов юлташа ёçре тулăшса пыма тытăннă.

НОВИКОВА.

Укçа-тенкё пухас плана ытлашшипех тултарар

1941 çулта совет халăхё умёнче хуçалăхпа культура строительстви енёпе питех те пысăк та ответлă задачăсем тăраççё. Çав задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кёртесси 1941 çулти финанс планёпе бюджета мёнле тултарса пынинчен те нумай килет.

Укçа-тенкё пухас ёçе районри тата ялти активă анлăн явăçтарса, массăсем хушшинче ăнлантарулла ёçе вăйлăн туса пынипе чылай районсем пёрремёш квартална укçа-тенкё пухас плана срокчен тата ытлашшипех тултарчёç. Ишлей районё (райфо заведующийё Н. С. Семенов) 1-мёш квартал планне 110,1 процент, Красноармейски район (райфо заведующийё С. Н. Игнатьев) — 107,2 процент, Шупашкар районё (райфо заведующийё П. С. Трофимов) — 101,4 процент тултарчёç. Красноармейски районри 25 ялсовет укçа-тенкё пухас плана мартăн 11-мёшне ытлашшипех тултарнă. Ку тёллёпше уйрăмăнах Янкас (172 процент), Красноармейски (160 процент), Типçырма (154,5 процент), Супар (140,5 процент) ялсоветсем лайăх ёçлерёç.

Укçа-тенкё пухас тёллёпше республикăра ытти районсенчи ялсоветсем те паха тёслёхсем кăтартрёç. Сăмахран, Сёнтёрвăрри районёнчи Кушниково ялсоветчё плана 173,3 процент, Шульгински — 155,8 процент, Вăрмар районёнчи Çён Вёренер ялсоветчё — 184,1 процент, Чкаловски районри Казыл-Чишма ялсоветчё — 165 процент тултарчёç.

Малта пыракан районсемпе ялсоветсем массăсем хушшинче партин XVIII конференцийё йышăннă решенисене ăнлантарса парас ёçе анлăн сарса ярса, колхозниксемпе единоличниксене хăйсен государство умёнчи обязательствисене вăхăтра тултарасси, тăван çёршывăн хуçалăхпа оборона вăйăватне пёрмаях çирёплетсе пырасси çинчен кулленех ăнлантарса панипе укçа-тенкё пухас ёçре çитёнӳсем тума пултарчёç, вёсем укçа-тенкё пухас тёллёпше квартал пуçлансанах вăйлăн ёçлеме тытăнчёç.

Чăваш республикинчи финоргансен кварталти плана мартăн 21-мёшёнче пётёмпех тултарма пур майсем те пулнă пулсан та 85 процент кăна тултарнă. Юлашки вунăкунлăхра ӳсём 13,5 процент çеç пулчё. Çапла вара, квартал пётиччен пирён 15 процент тултармалла пулчё.

Куславкка районё (райсовет исполкомён председателё — Салмин, райфо заведующийё — Липатов) укçа-тенкё пухас тёллёпше питех те ялăх ёçлет. Ку район плана мёнпурё те 67 процент кăна тултарнă, юлашки вунăкунлăхри ӳсём 11 процент анчах пулнă. Районра 1-мёш кварталти плана тултарнă ялсоветсем çук. Ку тёллёпше малта пыракан Аманик ялсоветё те плана 69 проц. çеç тултарнă, Ыраш-пулăх ялсоветчё вара мёнпурё те 15 процент кăна тултарнă.

Йёпреç районёнче те ёç чаплах мар. Район плана 75,5 процент тултарнă пулсан, Паразусински тата Хурамал ялсовечёсем 26—29 процент кăна тултарнă. Укçа-тенкё пухас плана пётёмте 62,9 процент, единоличниксенчен пухассине — 58,6 процент çеç тултарнă. Кунта укçа-тенкё парăмёсене юрнех вăхăтра парса татманнисене каçарас практикăна ку тарипчен те пётермен-ха.

Первомайски, Хёрлё Чутай, Сёмёрле, Тăвай, Пăрачкав районёсем хăйсене укçа-тенкё пухас тёллёпше начар ёçлени çинчен Чăваш АССР Совнаркомё кăтартса панине пурнăçлассишён тăрăшмаççё.

Укçа-тенкё пухас тёллёпше япăх ёçленине пула, учительсем ёçукçи вăхăтра илеймеççё. Мартăн 20-мёшне учительсене ёçукçи 1200 пин тенкё тӳлесе татман пулнă. Куславкка районёнче учительсене ёçукçи тӳлеме 116 пин тенкё уйăрса памалла пулнă пулсан, 35 пин тенкё, Йёпреç районёнче 90 пин тенкё вырăнне 9 пин тенкё çеç уйăрнă. Октябрьски районра учительсене ёçукçи пама укçа-тенкё нимён чухлё те уйăрман. Кая юлса пыракан районсен руководителёсен çакна ăнланса илмелле: учительсене ёçукçи вăхăтра паманшăн вёсен суд умёнче ответ тытмалла пулать.

Кувакино, Шăмăршă, Тăвай, Комсомольски, Первомайски, Сёнтёрвăрри районёсем пёрлешнё секторсенчен илекен государствăллă доходăн планне тултарас тёллёпше кая юлса пыннине халиччепех пётермен-ха, çак питех те кирлё ёçе районсен исполкомёсем контроллёсе тăмаççё, укçа-тенкё пухас ёçён органёсем хуçалăхпа суту-илӳ организацийёсем мёнле ёçленине тёрёслемеççё.

Райфо заведующийёсем налог инспекторёсемпе агентсен ёçне контроллесе пыманнине пула, райсовет исполкомёсемпе ялсоветсем вёсене начар пулăшса пынă пирки культсбор укçине пухасси чылай районсенче кая юлса пырать. Мартăн 20-мёшне культсбор укçине 72,2 процент çеç пухнă. Налог укçине те пухса пётермен. Налог пухас тёллёпше ёçлекен агентсемпе инспекторсем ялти активпа япăх ёçлеççё, укçа-тенкё пухас ёçе актива явăçтармаççё, социализмлă ăмăртăва анлăн сарса яни çук.

Перекет кассисен работникёсем хăйсен умёнчи ответлă задачăсене пурнăçа кёртессишён тăрăшса ёçлемеççё, çавăнпа перекет кассисене укçа-тенкё хывасси вăраххăн ӳссе пырать. Çак ёçе лайăхлатас тёллёпше районри тата ялти активăн тимлён ёçлес пулать.

Пёрремёш квартал пётиччен шутлă кунсем кăна юлчёç. 2-мёш квартала пёр парăмсăр кётсе илесси кашни районăн, финанс ёçёнчи кашни работникăн, кашни ялсоветăн хисеплё тивёçё пулса тăрать. 1-мёш кварталти финанс планне пётёмпе кăна мар, кашни район, кашни ялсовет тата пётём тӳлевсем тăрăх та тултармалла.

В. ТАВРИН.

Квартал планне тултарнă

Ёçсыннисем хушшинче массăллă ăнлантару ёçне анлăн сарнипе, Хирти Катекри (Канаш р.) перекет кассин агентстви контролерё А. Н. Корытников юлташ 1941 çулти пёрремёш квартала вкладсем явăçтарас плана срокчен тултарнă.

Çавăн пекех вкладсем явăçтарас енёпе пёрремёш кварталти плана Тăпăртанри перекет кассин агентстви контролерё Ипатьев юлташ та срокчен тултарнă. Мартăн 1-мёш тёлне ку перекет кассинче вкладсем 65 пин тенке çитнё.

Агитаторсем ёçленё çёрте

ЕЛЧЁК. Аслăпăла Тимеш ялсоветне Ворошилов ячёпе тăракан тата «МОПР» колхозсем кёреççё. Çаксемпе пёрлех ялсоветра единоличникла хуçалăхсем те чылай пулнă.

Юлашки вăхăтра ялсовета кёрекен колхозсенче тата единоличниксем хушшинче политикăллă-массăллă ёç вăйланчё. Агитаторсем хăйсене çирёплетсе пана участоксенче тăрăшса ёçлеççё. Çакна пула çак иртнё кунсенче ялсовечёпе 26 хуçалăх колхоза кёнё.

Хальхи вăхăтра агитаторсем ёççыннисем хушшинче партин Пётём Союзри XVIII конференцийён решенийёсене ăнлантарса параççё. Çавна май халё колхозсем çуракине мёнле хатёрленсе çитнине тепёр хут тёрёслесе тухаççё, палăртнă çитменлёхсене сийёнчех пётереççё.

А. ФЛОТСКИЙ.

Вырăс музыкин гениййё

(М. П. Мусоргский вилнёренпе 60 çул тултарнă тёле)

1881 çулти мартăн 28-мёшёнче, çуралнăранпа 42 çул тултарса, Модест Нетрович Мусоргский — тёнчери аслă композиторсенчен пёри — «Борис Годуновпа» «Хованщина» операсен авторё, вырăссен драмăллă музыкин гениллё реформаторё вилнё.

М. П. Мусоргский 1839 çулти мартăн 21-мёшёнче Псков губернинчи Торопецк уездёнчи çамаях пуян помещик çемьинче çуралнă. Çавăнти хресченсен юрăллă пуян творчествипе пулас композиторăн чёрине тарăн кёрсе вырнаçнă, ăна вăл нихăçан та манман, вырăс халăх чёлхипе тата творчествипе ăна аслă та хёрӳллё юрату сыхăнтарса тăнă.

М. П. Мусоргский музыкăна юратни, вăл музыка енёпе талантлă çын пулни ача чухнех палăрнă. Музыкăн пирвайхи урокёсене ăна амăшё панă. Фортепианопа выляма вёрентекен паллă педагог А. А. Берке ертсе пынипе Мусоргский чаплă пианист пулса тăнă.

Преображенски полкра çамрăк офицер пулнă вăхăтра Мусоргский вырăсен пысăк химикё-композиторёпе А. П. Бородинпа, унтан А. С. Даргомыжскипе паллашнă. Даргомыжский хăйён çамрăк тусён гениллё талантне курса илнё, ăна Милий Балакирев патне янă. Çак тёлпулу Мусоргский малашне мён ёçлессине татса парать.

1858 çулта Мусоргский çар службинчен тухнă, профессионал-музыкант пулса тăнă. Аппё-амăшёнчен юлнă пурлăхăн хăйне тивекен пайне тăвапне панă хыççăн, унăн служăçăсăр илмелли доход çăлăнсё урăх ниçта та çукман.

Композитор юлашки çулсенче пурăннă условисене аса илсен, халхи вăхăтра чёре сӳçенсе каять, çилленсе тарăхатăн. Вилес пек чирлё, пёр-пёчён, ăшă кётессёр пурăннă Мусоргский, гатăк çăкăр пултăр тесе, государство контролёнче ёçленё. Чир татăклăнах çапса хуçсан, Мусоргский валли йёркеллёрех пёр больницăра та вырăн тупăнман. Хăйён тусёсем — Н. А. Римский-Корсаков, В. А. Кюи, А. П. Бородин, В. В. Стасов тăрăшнипе çеç ăна, ординатор Бертенсонăн «тара кёрёшнё денщикё» пек кăтартса, çар госпитальне вырнаçтарма май килнё.

Çапла хăрушла йывăр условисенче пурăннă аслă композитор, анчах та çакă вăл Россинйăра кăна мар, буржуаллă «цивилизациллё» пётём тёнчере те çавăн пек пулнă. Асаплă пурнăçпа чире пула типсе хăрса, 31 çула çитсенех вилмен-и вара генийллё Франц Шуберт? Париж урамёсенче пёр пус укçасăр, кивё пушмакпа сӳремен-и вара Гектор Берлиоз — Франци музыкин чапё? Пёррехинче Венёри полици хула хёрринче çапкаланса сӳрекен çётёк тумлă çынна тытса чарман-и вара? Çав «çапкаланчăкăн» ячё — Людвиг ван Бетховен пулнă. Тата, юлашкинчен, вилнё Моцарта кил-суртсăр тата ашшё-амăшне астуман çынсен виллисемпе пёрле пёр шăтăка пăрахман-им вара? 1859 çулта «музыка туррин» памятникне лартма йышăнсан, унăн вил тăпри те пулман...

Çакăн пек ёнтё буржуаллă обществăри ёçсем, вăл капитализма пётернё хыççăн кăна улшăнать.

Мусоргский творчестви — нумай енлё творчество. Унăн творчествинче философиллё тарăн шухăш пурнăçра ача пек савăнăçлă пулнипе çыхăнса тăнă, чёререн тапса тăракан хёрӳллё хастарлăх — хăйён ёçне нимёнрен те ытларах юратнипе, хăйён вăйёсене шикленерех шанмасăр тăни — боецăн хăюллăхёпе çыхăнса пынă.

М. П. Мусоргский искусство задачине хăй мёнле пăхни çинчен çапла каланă: «Искусство вăл тёллев мар, çынсемпе калаçмалли средствоь. Унăн творчествăллă пётём ёçё çак принципа пăхăнса тăнă. Искусство законёсем ёмёрлёх законсем мар тесе шутласа, Мусоргский яланах çапла каланă: çак законсем, çыннăн мёнпур духовнăй тёнчи пекех, малалла аталанса тата улшăнса пыраççё. Вăл Даргомыжскине «музыкăри чăнлăхăн аслă учителё» тесе шутланă, хăй те, Даргомыжский пекех, реалист пулнă.



Мусоргский идейăллă музыкăшăн, «симфониллё попсене» хирёç, урăхла каласан, музыка ёçёнчи консерваторсене, музыкăна аталанма чарса тăракан консерваторсене хирёç кёрешнё.

Мусоргский хăйён ялавё çине саманан революциллё-демократиллё лозунгёсене çырса хунă пёрремёш композитор пулнă. Мусоргский хăйён ролёпе хăйён положенине мёнле ӳçăн курса тăнине вăл «Борис Годуновăн» премьери умён В. В. Стасов патне янă çыруран курма пулать. Мусоргский «Часах суда тămалла. Пире «Борисшăн» суд тунă вăхăтра... «Хованщина» çинчен шухăшласа кансем — хамăр лобнăй вырăна тăрасси çинчен шухăшлама савăнăçлă; хамăра илёртекен музыкăллă инçете эпир чăрсăрлăх таранах хаваслăн пăхатпăр, суд та хăрушă мар. Пире калёç: «Эсир турăпа этем законёсене таптаса тăкрăр!» тейёç. Эпир ответ парăпăр: «Çапла!» тейёпёр те ăшра шухăшлапăр: «Ку çеç пулать-и-ха!!». Пирён çинчен кранклатёç: «Сире часах тата ёмёрлёхех манёç» тейёç. «Çук, çук, çук...» тейёпёр эпир».

Мусоргскишён музыка çыхсемпе калаçмалли средство пулнă, вăл, «симфониллё попсем» çине тёллесе, вёсен хуçисене лекторнё. Мусоргский мировоззрепипе творчество хушшинчи хирёçӳллёхе пёлмен. Вăл творчествăллă хавхаланăва халăх музыкинчен илсе тăнă тата вырăссен аслă демократчёсен Белинскин, Чернышевскин тата Добролюбовăн вёрентёвёсенче хăйне валли тёрек тупнă. Унăн, çавăн пекех, Герцен та çывăх пулнă, вăл Герценăн «Кам айăплă?» повеçё тăрăх опера çырма та хăтланса пăхнă.

М. П. Мусоргскин чи пысăк произведенийёсен — «Борис Годуновпа» «Хованщина» операсен сюжечё — вырăс историйёнчи обществăллă-политикăллă фактсем пулса тăраççё. Икё оперинче те тёп герой — халăх: «Бориспа» «Хованщинăн» кашни тактёнчех эпир халăхăн пурне те çёнтерсе пыракан вăйне туйса тăратпăр. Халăх массине пётёмёшпе пёрле тата кашни уйрăм çынăн уйрăмлăхёсене кăтартса парас ёмёте Мусоргский никамран та лайăхрах пурнăçа кёртнё.

Новодевичье монастырёнчи сцена, патшана престола лартнине кăтартса паракан сцена, Василий Блаженный соборё патёнчи сцена тата юлашкинчен, Кромы патёнчи паллă сцена — музыка шедеврёсем пулса тăраççё. Вёсем халăх массин, пусмăрçăсене пăхăнса тăракан, анчах та хăйёнче гигантла хăват сыхласа усракан халăх массин конкретлă историллё портретне параççё, çав хăват тапранса кайсан, ăна нимён те тытса чарма пултарас çук.

Мусоргский Пушкинăн аслă драми «Борис Годунов» тăрăх çырнă опера—чăн-чăн гениллё произведени. Канăç сухатнă чёреллё Борис патшан образзё кунта чуна сӳçентерсе яракан трагедиллё образ пулса тăрать. Коронаци савăнăçёнче Борисăн витёр курса тăракан ăсё усал ёç сывхарса килнине туйса илет, унăн «Чунăма салху» монологёнче малашлăхран хăрани сисёнет.

«Расходилась, разгулялась удаль молодецкая» хор халăхăн богатырла вăйёпе хăюллă паттăрлăхне тёлёнмелле тёрёс кăтартса парать, çакăн пек чаплă страницăсем тёнчери музыка литературинче те нумай мар. Çак музыка вăл — вырăс халăх музыки.

«Хованщина», Мусоргскин çавăн пекех аслă иккёмёш опери те, çавнашкал характерлă енсемпех уйăрăлса тăрать. Анчах унăн трагизмё татах та тарăнрах пулё, мёншён тесен «Хованщинăра» татах та хаяртарах кёрешӳ пырать. «Хованщинăри» геройсем хушшинче Петр I çук-ха (ёçсем хёрарăмпатша Софья вăхăтёнче пулса иртеçё), анчах та операра çав самана усçăнах сисёнет. Кунта нумай сценăсенче çённи киввине хёсёрлесе кăларнине кăтартса панă.

Акă раскольниксем тён çинчен тавлашма Кремле пыраççё. Вёсен хорён кёввинче, вёсен вожакён Досифейăн юрринче сём аваллăх сисёнет. Досифей ăнланать: вилнисене чёррисене хирёçле кёрешёвё ăнăçлă пулас çук, çапла пулсан та вăл хăй майлă тăракансене вилём патне илсе пырать. Музыкăра «Петр йăвинчи чёпёсен» сассисем пăхăрпа та хурçăпа янăраса илтёнеççё, акă вăрман чăтлăкёнче раскольниксен скичё ялкăшать, кăмăллаппă стенасем ишёле-ишёле анаççё, Петр войскисен аллине лекес мар тесе хăйсене сунтарса яракан раскольниксен пытару юрри вăйсăрлăх массин конкретлă историллё портретне параççё, çав хăват тапранса кайсан, ăна нимён те тытса чарма пултарас çук.

Мусоргский Пушкинăн аслă драми «Борис Годунов» тăрăх çырнă опера—чăн-чăн гениллё произведени. Канăç сухатнă чёреллё Борис патшан образзё кунта чуна сӳçентерсе яракан трагедиллё образ пулса тăрать. Коронаци савăнăçёнче Борисăн витёр курса тăракан ăсё усал ёç сывхарса килнине туйса илет, унăн «Чунăма салху» монологёнче малашлăхран хăрани сисёнет.

«Расходилась, разгулялась удаль молодецкая» хор халăхăн богатырла вăйёпе хăюллă паттăрлăхне тёлёнмелле тёрёс кăтартса парать, çакăн пек чаплă страницăсем тёнчери музыка литературинче те нумай мар. Çак музыка вăл — вырăс халăх музыки.

«Хованщина», Мусоргскин çавăн пекех аслă иккёмёш опери те, çавнашкал характерлă енсемпех уйăрăлса тăрать. Анчах унăн трагизмё татах та тарăнрах пулё, мёншён тесен «Хованщинăра» татах та хаяртарах кёрешӳ пырать. «Хованщинăри» геройсем хушшинче Петр I çук-ха (ёçсем хёрарăмпатша Софья вăхăтёнче пулса иртеçё), анчах та операра çав самана усçăнах сисёнет. Кунта нумай сценăсенче çённи киввине хёсёрлесе кăларнине кăтартса панă.

Акă раскольниксем тён çинчен тавлашма Кремле пыраççё. Вёсен хорён кёввинче, вёсен вожакён Досифейăн юрринче сём аваллăх сисёнет. Досифей ăнланать: вилнисене чёррисене хирёçле кёрешёвё ăнăçлă пулас çук, çапла пулсан та вăл хăй майлă тăракансене вилём патне илсе пырать. Музыкăра «Петр йăвинчи чёпёсен» сассисем пăхăрпа та хурçăпа янăраса илтёнеççё, акă вăрман чăтлăкёнче раскольниксен скичё ялкăшать, кăмăллаппă стенасем ишёле-ишёле анаççё, Петр войскисен аллине лекес мар тесе хăйсене сунтарса яракан раскольниксен пытару юрри вăйсăрлăх

Совет музыкин аталанăвёнче Мусоргский мёнле вырăн йышăнса тăни çинчен калама та кирлё мар. Музыкăри аслă чăнлăха тупма, итлекенён чи тарăнри, чи вăрттăн кётесри туйăмёсене вăратма пёлес тесе, Мусоргскирен вёренмен пёр совет художникё те çук, унтан вёренмен чăн-чăн художник пёрре те çук.

Мусоргский пирёнтён тата пирён малашнехи ăрусемшён аслă вырăн йышăнса тăрать.

В. ГОРОДИНСКИЙ.

Европăри тата Африкăри вăрçă

(Вăрçă ĕçĕсен дневникĕ)

Англипе Германи хушшинчи фронтра вăрçă ĕçĕсем кăштах лăпланни палăрать. Германи командованийĕн сводкинче калана тăрăх, мартăн 25-мĕшĕнче Германи самолечĕсем Кăнтăр Англири промышленноçлă хуласенчен пĕрин çине пырса тапăннă, газ завочĕ çине бомбăсем пăрахнă. Германин тинĕс çинчи хĕпăшаллă вăйăсен операцийĕсем малаллах сарăлса пынă. Англин суту-илӳ тумалли темиçе суднине путарнă тата сиен кӳнĕ.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин хуралра тăракан «Шорхэм» ятлă судни Германин «Одер» ятлă пароходне тыткăна илнĕ.

Ыран мартăн 26-мĕш тенĕ чух çĕрле Англипе Германи хушшинчи фронтра нимĕнле пысăк ĕçсемех те пулман.

* * *

Мартăн 25-мĕшĕнче Албанири фронтра пысăк мар çапăçусем пулса иртнĕ. Итали сводкинче артиллери активлăхне палăртнă. Югославири «Време» хаçат корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, ытларах вăйлă çапăçусем фронтăн центральнăй участокĕнче пулса пынă. Хăшпĕр отрядсем, çаван пекех те тата Италин 11-мĕш çарĕн бронетанковăй часĕсем Вийоса юханшывĕн районĕнче (Тепелене сывăхĕнче) тата Девол юханшывĕ çинче грексен позицийĕсене атакăланă. Итальянецсен пур атакисене те сирсе янă, вĕсене пысăк çухатусем кӳнĕ. Фронтăн çурçĕр участокĕнче, Шкумба юханшывĕ пуçланнă çĕртте тата Пограден районĕнче, лăпкă тăнă.

Итали командованийĕн сводкинче калана тăрăх, Девол юханшывĕн сылтăм çыранĕ çинче Итали авиацийĕ грексен тылри базисем, склачĕсем тата лагерĕсем çине, çаван пекех Крит утравĕ çинчи Гераклионри авиаци бази çине бомбăсем пырса пăрахнă.

Вăтаçĕр тинĕсĕн хĕвелтухăç пайĕнче Ла-Валетта порчĕ çине (Мальта утравĕ) татах тепĕр хут бомбăсем пырса пăрахнă. Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 21-мĕшпе 24-мĕш хушшинче Англин Вăтаçĕр тинĕсĕнчи флочĕ Вăтаçĕр тинĕсĕн центральнăй бассейнĕнче операцисем туса ирттернĕ.

* * *

Сурçĕр Африкăра, халичченхи пекех, авиаци ĕçĕсем кăна пулнă. Итали сводкинче калана тăрăх, Германипе Итали самолечĕсем англичансен механизированнăй часĕсем çине бомбăсем пырса пăрахнă тата пулеметсенпе пенĕ. Ыран мартăн 25-мĕш тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Триполи çине пырса тапăннă.

Рейтер агентстви Сурçĕр Африкăри лару-тăру пирки çапла пĕлтерет: Лондонри çар çыннисем шутланă тăрăх, Триполитание пынă немĕçсен хĕпăшаллă вăйăсем хальхи вăхăтра чылаях пысăк подкрепленисем илеççĕ. Триполитание сахалтан та Германин пĕр бронетанковăй дивизийĕ кĕрешет, вăл пушхирĕн хĕвелтухăç пайĕнче разведкăллă операцисем тăвать. Хĕвелтухăç Африкăра Итали войскисем англичансене хирĕç кĕрешекен тĕп районсем, халичченхи пекех, Эритрея тата Абиссинин центральнăй пайĕ пулса тăраççĕ. Англин Абиссинири войскисем Аддис-Абеба çине 13 енчен наступлени туса пыраççĕ. Аддис-Абебăран хĕвелтухăç енче Марда перевалне туртса илнĕ хыççăн, Англи часĕсем Харар çинелле наступлени туса пыраççĕ. Англичансен малти отрячĕсем хуларан 30 километрта тăраççĕ. Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Харарпа Дире-Дауара итальянецсем 12—15 дивизи тан войскăсем пухса тăраççĕ. Харарта кăйĕнче укрепленисем çукпа пĕрех Англи войскисем Харар районĕнче наступлени туса пыни Аддис-Абебăна Джибути (Франци Сомалийĕ) хушшинчи чугунçулшăн хăрушлăх туса хуратъ. Аддис-Абебăран кăнтăр енче Неголлипе туртса илнĕ англичансен войскисем сурçĕр енĕнпе—Аддис-Абебапатнелле малалла кайса пыраççĕ, çакăвăл Абиссини столицийĕ умне çĕнĕ хăрушлăх къларса тăратать. Аддис-Абебапатĕнчен сурçĕр-хĕвеланăç енче Абиссини часĕсем Дебра-Маркос çинелле наступлени туса пыраççĕ. Дебра-Маркоса Италин 18 пин çынлă гарнизонĕ тăрать.

Керен районĕнче (Эритрейăра) хаяр çапăçусем пыраççĕ. Çапăçусенче икĕ енĕ те чылаях пысăк çухатусем тăваççĕ.

Мартăн 26-мĕш. (ТАСС).

Мацуока Берлина пырса çитнĕ

БЕРЛИН, мартăн 26-мĕш. (ТАСС). Германири информаци бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх, паян 18 сехетре Япони ютĕршыв ĕçĕсен министрĕ Мацуока официальнăй визитпа Берлина пырса çитнĕ. Ангальтски вокзалта Мацуокăна Германи ютĕршыв ĕçĕсен министрĕ Риббентроп кĕтсе илнĕ.

КĔСКЕН

* Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 20-мĕшĕнче Америка çар карапĕсем — 7 карап — Сиднея (Австралия) пырса çитнĕ. Çав эскадра командующийĕ адмирал Ньютон çапла каланă: Австралие ишсе каясси çинчен приказа пачах кĕтмен çĕртех хĕçпăшал таврашне кивçен е арендăна парассăн çинчен калакан закона йышăннă хыççăн çийĕнчех илнĕ, тенĕ.

* Голландире табак таврашĕ çинчен хуракан налога 100 процент ӳстернĕ.

* Турцире кофе питех те çителĕксĕр. Магазинсем умне пысăк черетсем пухăнса тăраççĕ.

* Мартăн 20-мĕшĕнче Нью-Джерси штатĕнчи (США) взрыв тумалли япаласем хатĕрлекен Геркулес фирминче взрыв пулнă. 50 çын вилнĕ, 200 çын йывăр аманнă. Заводăн пĕр пайĕ арканса кайнă.

✦ Мартăн 19-мĕшĕнче Франции Шанхайри концессийĕнче трамвайпа автобус компанийĕнче ĕçлекен рабочисем забастовка пуçланă, забастовка рабочисен çĕнтерӳпе вĕçленнĕ. Рабочисене ĕçукçи хăпартса панă. Паян рабочисем ĕçе тухнă.

Вăрман хатĕрлес, турттарса кăларас тата кирлĕ пункта турттарса пырас тĕлĕшпе обязательнăй йĕркепе пани плана Чăваш республикинчи районсем мĕнле тултарса пынине кăтартакан СВОДКА

(1941 çулти мартăн 25-мĕшне, процентпа)

Районсем	Хатĕрленĕ	Турттарнă	Кирлĕ пункта турттарса пынă
Улатăр	79,0	76,6	57,9
Кувакино	61,7	53,8	78,8
Первомайски	56,0	40,4	67,7
Шăрачкав	103,6	39,6	40,2
Чкаловски	90,1	53,5	—
Комсомольски	76,7	67,0	—
Пĕпреç	73,2	52,4	88,7
Канаш	72,2	55,4	—
Шăхасан	98,8	103,0	—
Вăрмар	89,2	84,6	—
Тăвай	99,7	92,2	—
Вăрнар	98,6	63,5	70,4
Калинински	116,7	108,1	87,4
Красноармейски	138,8	123,9	98,8
Çĕмĕрле	75,4	53,3	82,3
Элĕк	105,4	68,1	59,5
Хĕрлĕ Чутай	90,2	78,4	73,5
Советски	113,7	164,0	74,8
Етĕрне	89,6	87,1	—
Сĕнтĕр	80,3	93,7	—
Сĕнтĕрвăрри	79,2	70,7	—
Шупашкар	104,5	95,7	—
Ишлей	108,4	55,1	—
Октябрьски	91,7	77,5	—
Шăмăршă	79,3	75,2	56,6
Елчĕк	125,0	69,6	—
Республикипе	85,1	67,6	85,8

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Вăрмансене пушартан сыхласси

Чăваш АССР Совнаркомĕ 1941 çулта мартăн 21-мĕшĕнче «Вăрмансене пушартан сыхласси çинчен» постановлени йышăннă. Çак постановлени тăрăх, вăрмансене пушартан сыхлас тата пушарпа кĕрешес ĕçре кирлĕ пек мерăсем йышăнас тĕлĕшпе ответлă çынсене палăртнă. Гослесфонд вăрманĕсенче — вăрман лартса ӳстерес тата ăна пăхса усрас тĕлĕшпе ĕçлекен управленин, колхозсене ĕмĕрлĕх усă курма панă çĕрĕн территорине кĕрекен земфонд вăрманĕсенче — колхоз председателĕсем, торф кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен т. ыт. организацисене вăхăтлăха усă курма панă, гослесфонда кĕрекен вăрмансенче — организацисен руководителĕсем пушартан сыхланас ĕçшĕн ответлă пулса тăраççĕ.

Вăрманта пушар тухас хăрушлăха пĕтерес тĕлĕшпе вăрман хатĕрлекен организацисен кăçалхи апрелĕн 25-мĕшĕнчен иртнĕ çулта тата кăçал кассă вырăнсенче хăрăк туратсемпе çапăсене тасатмалла, вĕсене çунтарса ямалла. Çак срок тĕлнех çулла çӳрекен çулсене те тасатас пулать. Кун çăр пуçне пушар тухсан ытти вырăнсене сарăлассинчен сыхланмалли ĕçсене те туса ирттермелле.

Вăрман завочĕсен, йывăç усраха складсен, поселоксен тата вăрман çыннисем ытти çуртиĕрсен территорийĕсене те тĕрлĕ тасамарлăхран, хăрăк туратсенчен, çапăсенчен, çункăссенчен тасатмалла. Ку ĕçе те апрелĕн 25-мĕшĕнчен кая юлмасăр пурнăçламалла. Çаван пекех вăрмансенче вăрман лартса ӳстерес тата ăна пăхса усрас тĕлĕшпе ĕçлекен управленин положенинче пушарпа кĕрешес тĕлĕшпе палăртнă ĕçсене кăçалхи апрелĕн 30-мĕшĕнчен пурнăçласа ситерес пулать.

Вăрманта вут-кăвар чĕртсе çӳтермесĕр хăварнипе пушар кăларасран сыхланас тĕлĕшпе, апрелĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа октябрĕн 1-мĕшĕнчен вăран варринче тата ун сывăхĕнче усранкăсенче, уçă вырăнсенче тата çавансем çинче вутă чĕртсе çунтарма парнă. Чăрăшпа хыр вăрманĕсенче, гипĕ торф усракан вырăнсенче пушар çӳтермелли хатĕрсем çук йывăç склачĕсенче чĕлĕм туртма юрамасть. Çаван пекех кăмăк, смола, тикĕт хатĕрлеме, вăрман касма, каснă йывăçсене турттарма тата пăшал пеме чарналла тунă. Пушар çӳтермелли япаласемсĕр тракторпа вăрман территорийĕнче çӳреме юрамасть. Чугунçул çинче те паровозсем çулăм тытмалли хатĕрсемсĕр вăрман территорийĕнче çӳреме пултараймаççĕ.

Вăрман çуннине вăхăтра пĕлес тата пушара çӳтерме çийĕнчех кирлĕ пек ирĕлесем йышăнас тĕлĕшпе, вăрман хатĕрлекен организацисен тата химлесхозсен апрелĕн 20-мĕшĕнчен кая юлмасăр пожарнăй охранăсем тумалла.

Ĕççыннин депутачĕсен район Совечĕсен исполкомĕсене вăрманта пушар тухсан ăна вăхăтра çӳтерме çыннисене ытларах явăçтарас тĕлĕшпе, 1941 çулти апрелĕн 5-мĕшĕнчен кая юлмасăр кашни ялах вăрманăн уйăм участокĕсем çумне çирĕплетме хушнă. Çакăн пек ялсем хăйсем çумне çирĕплетнĕ вăрманта пушар тухсан ăна çӳтерессишĕн ответлă пулса тăраççĕ.

Вăрмансене пăхса усрас тĕлĕшпе ĕçлекен управленипе вăрманпромхозсен тата вăрман хатĕрлекен организацисен апрелĕн 10-мĕшне вăрманти пожарнăй охранăсем валли пушар çӳтермелли оборудованисене, инвентарьсене çителĕклĕ таран хатĕрлемелле, пушар вышкисене юсас пулать. Вăрман хуралçисене апрелĕн 20-мĕшчен тупса çитермелле.

Вăрман лартса ӳстерес тата ăна пăхса усрас тĕлĕшпе ĕçлекен управлечине вăрман пушарне çӳтернĕ вăхăтсенче вăрманта ĕçлекенсене ĕçлеме чарма ирĕк панă. Вĕсен хăйсен ĕçĕсене тума пăрахсах вăрман çӳтерме каймалла.

Чăваш АССР Совнаркомĕ вăрмансене çунса каясран сыхлас тата пушарта кĕрешес тĕлĕшпе республикăра гройка çирĕплетнĕ. Тройкăра çак юлташсем тăраççĕ: Чăваш АССР Совнарком председателĕн заместителĕ В. Г. Григорьев, вăрман лартса ӳстерес тата ăна пăхса усрас тĕлĕшпе ĕçлекен управлени начальникĕ Ф. В. Васильев тата М. А. Шарко юлташсем.

Çакăн пек тройкăсене ĕççыннин депутачĕсен район Совечĕсем çумĕнче те тума хушнă. Районсенчи тройкăна çаксем кĕреççĕ: район Совет исполкомĕн председателĕ, вăрманпромхоз директорĕ тата НКВД районри отделенин представителĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕн «Вăрмансене пушартан сыхласси çинчен» йышăннă постановленийĕ ун çинчен пичетре пĕлтернĕ хыççăн вăй илет. Ку постановлението пăснăшăн айăплă çынсене уголовнăй йĕркепе ответ тыттармалла тунă. НКВД, милици органĕсене тата вăрман лартса ӳстерес, ăна пăхса усрас тĕлĕшпе ĕçлекен управленине асăннă постановленине мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕслесе тăма хушнă.

Оборонăллă юрăсен конкурсĕ

Чăваш республикинчи Халăх творчествин çурчĕ кăçал январьпе март хушшинче оборонăллă юрăсен конкурсĕ туса ирттерчĕ.

Конкурса тĕрлĕ композиторсем пурĕ 39 юрă тăратнă. Мартăн 26-мĕшĕнче конкурс жюрийĕ юрăсене пăхса тухса 16 юрра палласа турĕ.

Пĕрремĕш премие çамрăк композитора Ф. Васильева «Уяв юрри» ятлă юрăпа памалла тунă (сăмахĕсем Г. Ивникăн). Иккĕмĕш премие «Шанчăклă хурал» юрăпа Ф. Чернышева тата çав ятлă юрăшăнах Ф. Васильева панă (сăмахĕсем И. Тукташăн). Виççĕмĕш премие «Çăлтăрсем çунатчĕç тӳпере» юрăпа Г. Лебедева тата «Командир çинчен хунă юрăпа» Ландышева панă. (Икĕ юррин те сăмахĕсем В. Юманкан).

Кунсăр пуçне, конкурса тăратнă юрăсенчен пилĕк юрра хор коллективĕсенче юрлама юрăллă тесе йышăннă: Г. Лебедев — «Çунатланнă çĕршыв» (сăмахĕсем Уйăп Мишшин). Ф. Лукин — «Аслă вăрман варринче (сăмахĕсем Я. Сигайăн), Г. Г. Лисков —«Шанчăклă хурал» (сăмахĕсем И. Тукташăн), Ф. Лукин—«Пограничник юрри» (сăмахĕсем Ехрим Иванĕн) тата Ф. Васильев — «Командир çинчен хунă юрă».

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре малта пыракан колхозниксене аванссем панă

КИЕВ, мартăн 25-мĕш. (ТАСС) Киев облаçĕнчи нумай колхозсенче выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстернĕшĕн колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлес пулăпа аванссем пама пуçланă.

Киев районĕнчи 45-мĕш Волынски дивизи ячĕпе тăракан колхозра кăçалхи январьпе февраль уйăхĕсенче фуражлă кашни ĕне пуçне 561 литр—пĕлтĕрхи январьпе февраль уйăхĕсенче суса илнинчен 164 литр нумайрах сĕт суса илнĕ. Сĕт суса илмелли плана ирттерсе тултарнăшăн доярка Кононенко юлташ аванс йĕркипе 203 литр сĕт илнĕ, Соловейко юлташ—156 литр, Ткаченко юлташ—126 литр илнĕ.

Иванковски районри Киров ячĕпе тăракан колхозри МТФ февраль уйăхĕнче, план тăрăх 4.817 литр сĕт суса илмелле пулнă пулсан, 7.661 литр суса илнĕ. Фермăра малта пыракан 8 доярка аванс йĕркипе 425 литр сĕт илнĕ. Киев районĕнчи Каганович ячĕпе, Ракитнянски районри Майăн 1-мĕш ячĕпе тăракан колхозсемпе ытти колхозсенчи доярксем те сĕт суса илмелли плана ирттерсе тултарнăшăн аванссем илнĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Радиоузелсене, радиопередачăсене ушкăнпа пухăнса итлессине йĕркелекен массовик-организаторсене тата радио итлекенсене

ПĔЛСЕ ТĂМА

Чăвашрадиокомитет 1941 çулти апрелĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа паракан передачăсан ячĕсем (вырăнти вăхăтпа).

ТУНТИКУН

17.54 17.59—Передачăсен программи тата пĕлтерӳсем.
19.00 19.13 „Юлашки хыпарсем" чăвашла кăларăмĕ.
19.15 19.28—„Юлашки хыпарсем" вырăсла кăларăмĕ.
19.30—19.58 Литература передачи.
20.30—20.43—Общественнăлла-политикăлла передача.
20.45—21.13—Концерт.

ЫТЛАРИКУН

17.54—17.53 Передачăсен программи тата пĕлтерӳсем.
18.05—18.33—Çăсем валли паракан передача.
19.00—19.13—„Юлашки хыпарсем" чăвашла кăларăмĕ.
19.15 19.28—„Юлашки хыпарсем" вырăсла кăларăмĕ.
20.30—20.43—Общественнăлла-политикăлла передача.
20.45—21.13—Концерт.
21.15—21.58 - Марксизм-ленинизма вĕренекенсене пулăшас майпа паракан передача.

ЮНКУН

17.54 17.59 - Передачăсен программи тата пĕлтерӳсем.
18.30—18.43 Агротехника ыйтăвĕпе паракан калаçу.
18.45—18.58 —Концерт.
19.00 19.13 „Юлашки хыпарсем" чăвашла кăларăмĕ.
19.15—19.28—„Юлашки хыпарсем" вырăсла кăларăмĕ.

КĔÇНЕРНИКУН

17.54—17.59 Передачăсен программи тата пĕлтерӳсем.
18.05—18.58 - „Радиохроника" журнал.
19.00—19.13 - „Юлашки хыпарсем" чăвашла кăларăмĕ.
19.15—19.28 „Юлашки хыпарсем" вырăсла кăларăмĕ.
21.00 21.23 - Марксизм-ленинизма вĕренекенсене пулăшас майпа паракан передача.

ЗРНЕКУН

17.54—17.53 —Передачăсен программисем тата пĕлтерӳсем.
18.05 18.33— Ачасем валли паракан передача.
19.00—19.13 „Юлашки хыпарсем" чăвашла кăларăмĕ.
19.15—19.28 „Юлашки хыпарсем" вырăсла кăларăмĕ.
20.30—20.43 Общественнăлла-политикăлла передача.
20.45—21.13 - Концерт.

ШĂМАТКУН

17.54—17.53 Передачăсен программи тата пĕлтерӳсем.
19.00 19.13 - Юлашки хыпарсем" чăвашла кăларăмĕ.
19.15—19.23 - „Юлашки хыпарсем" вырăсла кăларăмĕ.

ВЫРСАРНИКУН

20.15 20.53—Литературăпа музыка передачи.
21.00—21.28—Концерт.

АСĂРХАТТАРЛИ: **ирхи передачăсем çинчен уйăмăн пĕлтеретпĕр.**

РАДИО ИТЛЕКЕН ЮЛТАШСЕМ! Пирĕн передачăсем сире мĕнле килĕшни çинчен тата вĕсенче асăрханă çитменлĕксем çинчен пирĕн пата çырса пĕлтерме ыйтатпăр. Пирĕн адрес: г. Чебоксары, Красная площадь, 22, Радиокомитет. Çырусене маркăсăрах яма пултаратăр

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Радиокомитет.

ЧАССР СОВНАРКОМĔ ÇУМĔНЧИ ИСКУССТВО ĔÇĔСЕН УПРАВЛЕНИЙĔ

САРАТОВРИ ГОСУДАРСТВО КОНСЕРВАТОРИНЧЕ УÇĂЛАКАН

ЧĂВАШСЕН ОПЕРА СТУДИНЕ

ВĔРЕНМЕ КĔРЕС ТЕКЕНСЕНЧЕН ЗАЯВЛЕНИСЕМ ЙЫШĂНАТЬ.

Чăвашсен опера студийĕ Чăваш АССР валли опера кадрĕсем хатĕрлес шутпа уçăлать.

Ку студине паха сасăллă, лайăх юрлакансене, чăваш чĕлхине çителĕклĕ пĕлекен, 7 класран кая мар вĕреннĕ çынсене илеççĕ.

Вĕренме кĕрес текенсем 18 çулран кая мар, 25 çултан аслă мар пулмалла. Вĕренме илнĕ çынсене вĕренӳшĕн тӳлеттермеççĕ, стипенди тата общежити параççĕ.

Студире 6 çул вĕренмелле

Вĕренме кĕрес текенсене испытани тыттараççĕ: вĕсене сасă тĕлĕшпе, музыкăллă пултарулăх енпе тата ритм тĕлĕшпе тĕрĕслеççĕ.

Заявленисене апрелĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа малăн 15-мĕшĕччен йышăнаççĕ. Заявлението пĕрле çакăн пек документсем ямалла:

1. Хăçан çуралнăшăн çинчен свидетельство;
2. Вĕренни çинчен свидетельство;
3. Студире вĕренме май памаллă чирсем çукки çинчен больницăран илнĕ хут тата шатра кастарни çинчен справка;
4. Икĕ фото-карточка, иккĕшĕн çине те заявлени параканăн хăйĕн алă пусмалла;
5. Çар службине кăтартса паракан хут.

Студири занятисем сентябрĕн 1 мĕшĕнче пуçланаççĕ.

Заявленисене çак адреспа ямалла: гор. Чебоксары, Чувашской АССР, Дом Советов, Управление по делам Искусств при СНК ЧАССР.

Ответ валли çыру йĕнче 30 пуçăх икĕ марка хурса ямалла.

Испытани хăçан пуласси çинчен уйăмăн пĕлтереççĕ.

3—2

СТАЛИНЛА ЛАУРЕАТСЕМ

Н. Н. БУРДЕНКО

Николай Нилович Бурденко Совет Союзĕнче нерв хирургин шкулне пуçарса яракан тата ăна малалла хăвалăн, ăнăçлăн ертсе пыракан руководителĕ пулса тăрать. Нерва хирургийĕ медицинăра çĕнĕ, çамрăк уйăм шутланать. Вăл шутран пуç мимин хирургийĕ пуринчен те йывăр наука пулать мĕншĕн тесен унта пурнăçлăн калаçу çук паха центрсем нумай. Вăл центрсем пĕр пĕринчен инçе мар, юнашарах тăраççĕ. Пуç миминчи чирсене пĕлме тата вĕсене операци туса сыватмалли майсене туса хатĕрлеме миме анатомипе физиологине тата вĕсем хушшинчи сыхăнăва питĕ лайăх пĕлес пулать. Унтан, тĕрĕс диагнос лартасси те кунта çăмăл ĕç мар.

Николай Нилович çак йывăр ĕçе суйласа илсе темиçе çулсем хушши ыйнмасăр ĕçлесе пынă. Вăл тăрăшнипе Мускавра ятарласа нерва хирургин институчĕ уçăлать.

Малтанхи тапхăрта вăл институтра пуç шăммин хыçалти лапамĕнчи шыçăсене (опухольсене), кистасене тата тĕрлĕрен шыçăнса, сыпçăнса ларакан чирсене операци туса сыватас ĕçе пуçарса янă. Пуринчен ытла вăл шыçăсем миме ăшĕнчен тулалла ӳсекенисем пулнă. Çапах, малтанхи вăхăтра йывăрлăхсем нумай пулнă. Анчах халĕ ĕнтĕ вăл çулсем иртнĕ.

Тепĕр тапхăр — мозжечок ăшĕнчи шыçăсем. Кунта операци тунă чух органсемпе тканьсене сиенлесрен питĕ сыхланмалла, кăштах йăнăшни те пысăк сиен туса хума пултарать. Анчах ситутата белофинсемпе çапăçнă вăхăтра йывăр аманса тăн çухатнă К. ятлă сынна илсе пынă. Операци тусан вăл та сывалнă.

Продолговатăй мимере çынна сывлаттаракан тата юн тымарĕсене тапаракан центрсем тăраççĕ. Кунта операци тума питĕ пысăк сыхлану тата ĕлĕмелле мастерлăх кирлĕ. Николай Нилович, çавнашкал мастерлăха хăй ыллине илсе, çав таврари чирсене пула чăлахлаписа ларнă çынсене çĕнĕрен ура-аллăлла тăвать. Çак ăнăçлă вырăнсене вĕсене хикофильм çине те ӳкерсе илнĕ.

Николай Нилович туса хатĕрленĕ пысăк пайсенчен тепри вăл — гипофиз шыççисем. Ку çĕрти шыçăсем куç нервисене лăпчăтса пăснипе çын сукăр пулса юлать. Çакăнта хăçан тата мĕнле операци тумаллине Бурденко тĕрĕс кăтартса панă, унăн техники пуринчĕн те ырламалла ĕç пулса тăнă. Çавнашкалах, пуç миминче куç нервисем хĕресленнĕ вырăнта пушăлан шыçă, тăртану процессĕсем куç нервисем тавра спайкăсем туса хураççĕ. Кайран çын вăйсăр куракан е пĕтĕмпех курми пулать. Çакăн пек чирсен хирургине те Бурденко ертсе пыракан институтра туса хатĕрлеççĕ.

Операци хыççăнхи вăхăтра Бурденко уйăмăнах сăнаса пырать. Операци тунă хыççăн миме хăйне майлă тăртанать, сарăлать. Çакă вăл ун пек чирлĕ çынсене ăрасна пăхма, эмеллеме хушать. Çавна сăнаса пынă опыт Николай Ниловича нерва системин острай травмисене те лайăхрах ăнланма пулăшнă. Пуç миминче мирлĕ вăхăтре операци туса пĕлнĕ материалсем вăрăй травмисене сыватнă çĕрте те пысăк усă параççĕ.

Н. Н. Бурденко, ĕлĕк рядовой çар хирургĕ пулнăскер, халхи вăхăтра оборона ĕçĕнче пысăк вырăн йышăнса тăрать, вăл Хĕрлĕ Çăран главнăй хирургĕ пулса, наукăпа тĕпчев, организаци тата боецсене хирурги пулăшăвне тарас тĕлĕшпи пысăк, пĕтĕм çĕршыва усăллă ĕçсем туса пырать.

Нерва хирургин институтĕнче ятарласа пуçпа çурăм мимисен боевой травмисене тĕпчесе сăнакан, сыватакан уйăм пур. Унта боецсене пысăк квалификацийлĕ пулăпусем параççĕ

Анчах çаксем вĕсем Бурденко ытти (периферический) нервăсене манса хăварнине пĕртте пĕлтермест. Кунта та пысăк опытсем, сăнанисем пур. Касса татнă нервăсене тата вĕсем мĕнле сыпăнма пултарнине сăнаса пыни, выльăхсем çинче тунă нумай опытсем нервăсене çĕлемелли чи лайăх майсем тупма пулăшнă.

Бурденко нумай вĕреннĕ çын, хăй ĕçĕсене вăл çĕнĕ наука никĕсĕ çинче туса пырать, унпа пĕрлех хăй те çĕнĕ наукăсем тупса, хатĕрлесе пырать, наукăпа суялăха кураймасть. Хăйне çаван пек тытакан, хăй умне пысăк требованисем лартакан Николай Нилович хăйĕн сотрудникĕсене те çавнашкалах пулма вĕрентсе пырать.

Темĕнле йывăр тата хăткăс ыйтусене те кĕскен, просто тата пурне те ăнланмалла ăнлантарса пани çак аслă ученăй халăх массипе çыхăнтарать. Халăх хăйĕн сталинла ученăйне тата унăн ĕçĕсене юратса, ăна СССР Верховный Совечĕн депутатне суйланă. Совет правительстви Николай Ниловичăн тĕнчипе палăрăнă çĕнĕ ĕçĕсене пысăк хак парса, пĕрремĕш степеньлĕ Сталинла преми панă.

ЗАКЛЮЧИТЕЛЬНЫЙ БАЛАНС

Янымовской леспромартели „Дружба" системы Чувашдревпромсоюза на 1-1-41 г. (в руб.)

АКТИВ	На 1/I 40 г	На 1/I 41 г.	ПАССИВ	На 1/I 40 г.	На 1 I 41 г.
Основные средства	66130	70387	Основной фонд	105457	114678
Предметы, не относимые к основным средствам .	16929	16605	Паевой фонд	29062	31489
Сырье, материалы и топл.	84842	89351	Специальные фонды . . .	11381	15454
Незавершенное производст.	6025	4302	Краткосрочные ссуды . . .	49800	15000
Готовая продукция . . .	50003	45818	Расчеты (кредиторы) . . .	48638	41430
Товары отгруженные . . .	22605	—	Прибыль	67701	69883
Денежные средства . .	27604	4316			
Расчеты (дебиторы)	728	2045			
Отвлеченные средства . .	37173	55108			
БАЛАНС .	312039	287942	БАЛАНС .	312039	287942

Сводная таблица прибылей и убытков

Убытки			Прибыли		
От списания безнадежн. долг.	1795	—	От реализации продукции	68972	69883
			Доходы прошлых лет	524	—
ИТОГО .	1795	—	ИТОГО .	69496	69883
Прибыль . .	67701	69883	Убытки . .	—	—
БАЛАНС .	69496	69883	БАЛАНС	69496	69883

Настоящий баланс утвержден балансовой комиссней Чувашдревпромсоюза 25/I—41 г.

Председатель правления ПАЙМАНОВ.

Гл. бухгалтер ЯНЫШЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редактор заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн —4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн — 0—88, сырусемпе рабселькорсен пайĕн—2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» журналăн—3—23, «Ленин çулĕпе» журналăн—0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 2709

Гер. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии Чувашской АССР. Заказ № 191. Ф. Б. 59×84 п. л.